Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 5 ТУНТИКУН 205 (5019) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — [illegible], ред. заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, парти пурнăç пайĕн — [illegible], ялхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн — 0—88, промышленнăç пайĕн — 7—97, ялкорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Йединоличниксем колхоза йышлăн кĕрессине организацилер

Хуçалăхăн социалисăмла çистеми пирĕн çĕршывра пуçпулса тăракан формă пулса тăчĕ. Çĕршывăн ялхуçалăхĕнче колхозсемпе совхозсем, социалисăмла хуçалăхсем, татăкланах тата ялан-ланах çĕнтерчĕç, вĕсем кунсеренех тĕреклен-се, хăватлăнса пыраççĕ. Пĕтĕм çĕршывпа пĕрле чăваш хресченĕсем те социалисăмлă çулпа шанчăклăн та хăйулăн малала утаççĕ. Хресченсен тĕп масси колхозра телейлĕ те савăнăçлă пурăнăçпа пурăнать. Колхозлă хресченсем республикăри пĕтĕм çĕр талккăшĕн 91 процентне акса тăраççĕ. Вĕсен 350 комбайн, пиншер тракторсем тата ытти шултра машинсем пур. Ĕлĕк помещиксемпе кулаксен аллинче пулнă чи лайăх çĕрсене халĕ колхозлă хресченсем акса тăраççĕ. Вĕсем ăна ĕмĕрлĕхех тата тӳлевсĕр усă курма илнĕ. Совет хресченĕ ялан-лăхах эксплоататорсен пусмăрĕнчен хăтăлнă. Вăл ирĕклĕ çĕршывра, Сталинла Конституци саманинче тулли правалă гражданин пулса пурăнать, ĕçлет, кĕрешет.

Колхозлă хресченшĕн, пĕтĕм ĕçсыннисемшĕн партипе совет правительстви ырми-канми тăрăшаççĕ. Ялхуçалăхне хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантарас, хресченсене пуян та культурăлă пурнăç туса парас тесе, вĕсем нумай вăй хучĕç, сахал мар укçа-тенкĕ расхутларĕç. Партипе правительствă тата Сталин йулташ ĕçсыннисен интересĕсемшĕн кĕрешеççĕ, вĕсемшĕн тăрăшаççĕ. Вĕсен урăхла интерессем çук. „Кăтартса парăр-ха есĕр мана,—тенĕ Сталин йулташ колхозник ударниксен пĕрремĕш сиесĕнче,—капиталиссемпе помещиксене мар, кулаксемпе пуйансене мар, ĕçхресченĕсене хӳтĕлесе пулăшса тăракан правительствăлă урăх çĕршыв. Çакнашкал çĕршыв тĕнчере урăх çук, пулман та. Пирĕн Совет çĕршывĕнче анчах рабочисемпе хресченсемшĕн, колхозниксемшĕн, хуларипе ялти мĕн пур ĕçсыннисемшĕн хытă тăракан, мĕн пур пуйансене, эксплоататорсене хирĕç кĕрешекен правительствă пур".

Ахальтен мар ĕнтĕ колхозлă ял тĕпренех çĕнелсе улшăнчĕ. Колхозлă хресченĕн пурнăçĕ телейлĕ те тулăх пурнăç пулса тăчĕ. Çавăн пек ялта та çавăн пек пурнăçра кăна стахановецсем шăтса ӳсеççĕ, çавăн пек пурнăç кăна геройсемпе героиньăсене çуратать.

Ялхуçалăх артелĕн сталинла уставне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыни, колхозсене организацилĕх йĕнчен çирĕпленме пулăшрĕ. Колхозсен тупăшĕ, çапла майпа колхозниксен тупăшĕ, вăйлăн ӳссе пырать. Пиншер пăт тырă тата пиншер тенкĕ укçа ĕçлесе илекен колхозниксем халĕ ĕнтĕ сахал мар. Йелчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕ, комсомолĕц Панфилăв пĕлтĕрех те ĕнтĕ 1.100 пăт тырă тата 2431 тенкĕ укçа илнĕ. Йĕпреç МТС-чи комбайнер Шмагин йулташ кăçал 205 пăт тырă тата 6222 тенкĕ укçа ĕçлесе илнĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне 8-шар килограм тырă тата чылай укçан пама шутлать. Колхозри пуйан пурнăç çинчен, татах та пуйанрах малашлăх çинчен уççăн кăтартса паракан çакăн пек примерсем питех те нумай илсе кăтартма пулать.

Пирĕн çĕршыври кашни ĕççынни хресченшĕнех колхоз алăкĕ уçă, кашни хресченех колхоза кĕрсе, культурăлă та пуйан пурнăç çулĕ çине, социалисăмла çул çине тăма пултарать.

Хуçалăхăн социалисăмла çистеми халĕ—пуçпулса тăракан формă. Анчах халлĕхе, Сталинла Конституци тăрăх, йединоличник хресченсемпе кустарсен вакă, уйрăм хуçалăхĕсем, çын вăйне експлоатацилемесĕр хăйсен ĕçĕпе тытса тăракан хуçалăхсем пулма, пултараççĕ.

Йединоличниксенчен хăшпĕрисем, ялхуçалăхне йухăнтарса ярса, хăйсен лашисемпе спекулятивлă тĕллевсемпе кăна усă кураççĕ. Лашасемпе укçа тупас, услам тăвас шутпа ĕçлесе, çулталăкра вĕсем 3—4 пиншер тенкĕ илеççĕ, икшер лаша тытма пуçлаççĕ, çапла пăсăлса кайса, услам туса çеç пурăнаççĕ. Çакă вăл йединоличниксен государствă умĕнчи обйазательствăсем тĕлĕшĕнчи дисциплинине хавшатса пырать, вĕсене совет саккунĕсене пурнăçлассинчен айакра тăрса йулма май парать, колхозниксен çирĕпех мар пайне пăсса ярать, йединоличник хуçалăхĕсене малашне те колхоза явăçтарас ĕçе чăрмантарать.

Государствăна хирĕçле практикăна, спекулятивлă майсемпе услам туса пурăнас практикăна пĕтересси, колхоз строительствинче çĕнĕ çĕкленӳ тума май парасси—çакăн пек ĕнтĕ ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ колхозниксем ыйтнине майлă кайса „Йединоличник хуçалăхĕсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси" пирки йышăннă саккун тĕллевĕ. Ку ĕнтĕ йединоличник хуçалăхĕсем, колхозниксемпе танаштарсан, саккунсăр преимуществăлă пулса тăнине пĕтерессине пĕлтерет.

Саккунра каланă: „1938 çулти октаберĕн 15-мĕшчен колхоза кĕнĕ тата хăйсен лашисене колхозсене панă хуçалăхсене лашасем çине хунă государствă налогне тӳлессинчен хăтараççĕ".

Çак çăмăлăхпа, паллах ĕнтĕ, республикăри тӳрĕ ĕçлекен йединоличниксем анлăн усă курма васкĕç. Саккун тухнăран вара Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сĕнтĕрпуçри колхоза 17 йединоличник хуçалăхĕ кĕнĕ, Шуршăлти колхоза—15 хуçалăх, Çичĕпӳртри колхоза—8 хуçалăх, районра пĕтĕмпе 82 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Районри актив ССРС Верховнăй Совет Çессин ĕçĕсем çинчен ăнлантарма ялсене тухса кайни ку тĕлĕшре татах та пысăк ӳсĕмсем тума пулăшассине шансах тăмала.

Анчах чылай районсенче колхоз йухăмĕ хăй тĕллĕн пулса пырасса шанни халĕ те пĕтмен-ха. Колхоза кĕме ыйтса панă зайавленисене пăхса тухмасăр нумайччен тытаççĕ. Ялхуçалăх артелĕн сталинла уставне пăснипе çителĕксĕр кĕрешеççĕ. Колхозниксене хăйсен килĕнче ĕçлеме лашасем парас ĕçе кирлĕ пек йĕркелесе çитермен. Уйрăмăнах Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхоз йухăмне йертсе пырас ĕç çине питех те çăмăллăн пăхать. Оперативлă йертсе, пулăшса пымала чухне, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхоза кĕнисен хисепне те пĕлсе тăраймасть.

Парти, совет тата çĕрĕç органĕсен задачи—ССРС Верховнăй Совечĕ „Йединоличник хуçалăхĕсен лашисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен" йышăннă саккуна кашни колхозник, кашни йединоличник патне çитересси, агитацилĕ-массăлă ĕçе вăйлатса ярасси, çапла майпа тӳрĕ ĕçлекен йединоличниксем колхоза массăлăн кĕрессине организацилесси пулать.

„Иосиф Сталин" пăрçĕмрен Мурмăнскра

Çентаберĕн 3-мĕшĕнче Мурмăнск портне „Иосиф Сталин" пăрçĕмрен çитнĕ. Вăл Ленинградран Заполярйе хушшинчи çулăн пĕрремĕш тапхăрти пысăк испытанисене ăнăçлăн иртернĕ.

„Иосиф Сталин" пăрçĕмрен 2.300 мил çула ăнăçлăн вĕçленĕ. Вăл социалисăмлă аслă державăн ялавне тăватă тинĕс—Балти, Çурçĕр, Норвежск, Баренцовă тинĕссем урлă мухтавлăн вĕлкĕштерсе иртнĕ.

Халĕ арктикăри пысăк рейсăн пĕрремĕш тапхăрне çеç вĕçленĕ-ха. Вăл пăрçĕмренĕн машинисемпе механисăмĕсем лайăх пахалăхпа ĕçленине шанчăклăн кăтартнă.

Трӳм çине 1.200 тоннă кăмрăк тата икĕ çул пурăнмалăх çимĕç илнĕ хыççăн, пăрçĕмрен малала, хĕвелтухăçне тухса кайать. Диксон утравĕ патне кĕнĕ хыççăн, пăрçĕмрен Вилькицк проливĕ тăрăх Лаптĕвсен тинĕсне кĕрет, кунта вăл суднăсене пăрсем хушшинчен илсе кăларассипе ĕçлемеле.

(ТАСС).

Йертсе пырас ĕçсене лартнă

Трактăр-савăт районĕнчи парти организацийĕ—Сталинград хулинчи чи пысăк организацисенчен пĕрийĕ пулать. Сталинградри трактăр савăтĕнче йăва çавăрнă троцкисла-бухаринла бандитсен тăшманла ушкăнне тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, парти членĕсене вĕрентессипе вĕсене партин йертсе пырас ĕçĕсене лартасси чылайах вăйланнă.

Кăçал производствăра малта пыракан 60 коммуниста парти ĕçне лартнă.

Сталинградри трактăр савăтĕнчи теплоелектроцентраль машинисĕ Степанăв йулташ хальхи вăхăтра ПСК(б)Парти райкомĕн парти кабинечĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Ремонтлă-механически цехăн шлифовальщикĕ—стахановец Çедов йулташ хальхи вăхăтра парти Обкомĕн инструктăрĕ пулса ĕçлет. Трактăр-савăт райкомĕн пĕрремĕш çекретарне ремонт цехĕн електрик-инженерне Дулькин йулташа, иккĕмĕш çекретарне механически-сборочнăй цехăн начальникне Леонтйĕв йулташа суйланă.

(ТАСС).

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн çиччĕмĕш пленумĕн çентаберĕн 3-мĕшĕнчи ирхипе касхи ларăвĕсенче Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн çекретарĕ Н. М. Шверник йулташ Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн улттăмĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен тунă доклад тăрăх пренисем пынă.

Пренире тухса калаçакансем çаксене кăтартса панă: критикăпа самокритикăна сарса йанă пирки, профсойуз организацисем профсойуз членĕсен политикăлă сыхăлăхне ӳстернĕ, профсойуз организацисен аппарачĕсен руководствине хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла-бухаринла агентсенчен тасатнă.

Пленумра Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн, унăн пайĕсен ĕçĕсене, пуринчен ытла, Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн начар ĕçлекен пайĕсенчен пĕрин—культурă пайĕн ĕçĕн çитменлĕхсене критикленĕ.

Тухса калаçакансем пурте пекех çĕнĕ кадрсене политикăлă воспитани парасси çинчен каланă. Вĕсем çакна кăтартса панă: профсойуз ĕçне çĕнĕ çынсем пынă, вĕсем ĕçе часах хĕрӳллĕн тытăннă, анчах вăл çынсен вĕренĕвĕ, вĕсене йертсе пырасси начар.

Çентаберĕн 3-мĕшĕнчи ирхипе касхи ларусенче пренире 21 çын тухса калаçнă.

(ТАСС).

Предплужниклĕ плугсемпе сухалакан трактăриссене ĕçукçи хушса тӳлессине ӳстернĕ

ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çĕрĕç органĕсене кăçал кĕрхи çĕртме сухаланă çĕрте предплужниклĕ плугсемпе пĕтĕмĕшпех усă курма хушнă. Машинă-трактăрлă станцисен предплужниклĕ плугпа ĕçлекен трактăриссене ĕç укçи, малтанхи хакпа танлаштарсан, 10 процент ӳстерсе параççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсене МТС трактăр бригадисемпе кĕрхи çĕртме сухаланă çĕрте предплужниклĕ плугсене трактăр çумне кăкарнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене те ĕçукçи 10 процент хушса пама хушнă.

(ТАСС).

Комсомолĕц-пограничниксем

Çакă вăл Кара-Кумри хăйăрлăх хирĕсенче пулнă. Нарйад пуçлăхĕ—политрук помощникĕ Вострикăв йулташ (унта погранотрйад начальникĕ полковник Астафйĕв йулташ) виçĕ бойецпа пĕрле чикĕ участки тавра çавăрăннă. Чикĕ урлă лашапа касна йĕре курсан, ун çинчен заставăна пĕлтернĕ те, вĕсем мĕн кас пуличченех чикĕне пăсакана йĕрленĕ. Вуникĕ сехет хыççăн чикĕне пăсакана тупнă. Вострикăвпа Петешов красноармейĕц ун патне шуса пынă та, ăна сисмен çĕртен пырса тытса, унăн пăшалĕсене туртса илнĕ. Çав çын пĕр йут государствăн пысăк шпионĕ пулнă.

Комсомолĕц-пограничник Лошакăв йулташ, икĕ бойец-комсомолĕцпа пĕрле, нарйадра тăнă вăхăтра чикĕне пăснă икĕ çын йĕрĕсене курнă. Вĕсем хыççăн шыраса утмăл километр кайсан, пограничниксем чикĕне пăсакана тĕл пулнă, лешĕ пограничниксене хирĕç пăшалпа пеме пуçланă. Хăйулă пограничниксем шпиона тытса, ăна хĕçпăшалсăрлатнă. Унăн Стрихнин ятлă наркăмăш пулнине тупнă. Ăна чикĕ патĕнчи шывлă выраннесене наркăмăшлатма задани панă пулнă.

Комсомолĕц-пограничниксем заставăсенче тава тивĕçлĕ çынсем шутланаççĕ. Çар ĕçĕпе политикă вĕренĕвĕн отличникĕ кĕçĕн командир-комсомолĕц Трытйаков йулташ 35 чикĕ пăсакана тытнă. Комсомолĕц Дворникăв йулташ—30 çынна тытнă.

Халăх мухтавлă пограничниксене хĕрӳллĕн йуратать. Чикĕ хĕрринчи çарсен чи лайăх представительĕсене Туркмен ССР Верховнăй Советне пурте пĕр шухăшлăн пулса суйланă. Халăхсем шанса суйланă депутатсем хушшинче—комсомолĕцсем Шатманăв тата Йемцов йулташсем пур.

(ТАСС).

Хĕрлĕ Çар призывĕ

Призывниксен пысăк савăнăçĕ

ЙĔПРЕÇ. (Телефон тăрăх). Призыв пункчĕ кăçал призыва иртнĕ çулхинчен лайăхрах кĕтсе илчĕ. Призыв пунктне хĕрлĕ ялавсемпе, плакатсемпе капăррăн илемлетнĕ, Кирек ăçта пăхсан та—илем. Призыв пунктĕнче таса, çутă. Призывниксем валли буфет, столовăй уçнă. Кунта хĕрлĕ кĕтес, медицинă пункчĕ, справкă сĕтелĕ ĕçлет. Хаçат-журнал, домино, шашкă-шахмăт çителĕклĕ. Патефон тăтăшах ташă-кĕвĕ йуррисене шăрантать. Медицинă работникĕсем, агитаторсем, командирсем призывниксем хушшинче калаçусем туса иртереççĕ.

1917—1918 çулсенче çуралнă призывниксем призыв комиссине хаваслăн кĕреççĕ. Кашнин Хĕрлĕ Çара кайас кăмăл пысăк. Алтăнкасси йалĕнчен килнĕ призывник Романăв йулташ комиссине кĕрсе тухнă хыççăн çапла каларĕ:

— Мана Хĕрлĕ Çара илчĕç. Епĕ савăнатăп. Хĕрлĕ Çара кайса паттăр бойец пулма сăмах паратăп. Тăшмана совет чикки çывăхне те йамăпăр!

Çавăн пекех çав йалти призывник Митуков призыв комиссине тулли кăмăлпа кĕчĕ.

— Мана кавалерине илчĕç. Хĕрлĕ Çар ретне кайса епĕ пултарулă кавалерис пулма тăрăшатăп,—терĕ вăл.

„Чăваш пионер" крахмал савăтĕнче ĕçлекен призывник Галкин та Хĕрлĕ Çара кайнипе питĕ савăнать:

— Мана авиаци чаçне илчĕç. Вăл манăн пысăк телей. Манăн ĕмĕт—пирĕн Совет Сойузĕн геройĕсем пек паттăр летчик пуласси.

Призывниксем призыва ĕçри çитĕнӳсемпе пыраççĕ. Йĕпреç поçолкинчи призывник Варганăв Васçилий грузчикре ĕçлесе куллен ĕç нормине ялан 200—250 процент тултарса пынă.

Д. Михайлăв.

Сывлăхлă призывник

ÇĔРПӲ. Призыв пунктне çирĕп сывлăхлă çамрăксем килсе тăраççĕ. Вĕсенчен чылайĕшне Хĕрлĕ Çар ретне илеççĕ.

„Çĕнĕ пурнăç" колхозри призывник Н. И. Соболĕв комиссине пысăк çитĕнӳсем тунипе пычĕ. Вăл лайăх физкультурник. Пур тĕрлĕ оборонă значокĕсене те илнĕ.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Китай çарĕсем, Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ патĕнче Жуйчан районĕнче (Центрти Китай) йапонĕцсене хыттăн аркатнă, ăскерсем, хальхи вăхăтра укрепленисем тума тытăннă. Йапонĕцсем газсем йани те, темиçе хутчен атакăсем туни те китайĕцсен хыттăн хирĕç тăрас ирĕкне хуçайман. Вĕсем йапонĕцсен пур атакисене те пит пысăк çухатусем тутарнипе сирсе йараççĕ.

Йанцзы шывĕн çурçĕр çыранĕнче Китай çарĕсем йапонĕцсене Хуанмей таврашĕнчи высотасенчен хĕссе кăларнă. Йапонĕцсем кайала чакнă та, хальхи вăхăтра хула çтенисем хӳттинче вырнаçнă. Китай çарĕсем контрнаступлени туса пыраççĕ.

Хенань провинцин çурçĕр пайĕнче (Çурçĕр Китай) Китай çарĕсем Цзйуане тытса илсе, малала кайнă, вĕсем йапонĕцсене Цзун-и йатлă хуларан (Мысанрен çурçĕреле) хăваласа кăларнă. Йапонин Мынçанри отрйадне тылран татса илнĕ.

Августăн 31-мĕшĕнче Лунхайск чукунçул районĕнче вăрçакан партизансен нумай çынлă отрйачĕ Çуйчжоуна кĕрсе кайнă, унта халĕ урамсенче çапăçусем пыраççĕ.

Шаньси провинцин кăнтăр пайĕнче çапăçусем çаплах пыраççĕ. Йулашки икĕ уйах хушшинче çав районра йапонĕцсен, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, 20 пин çын пĕтнĕ.

Кăнтăр Китайра Йапони самолйочĕсем Гуандун провинцин хĕвелтухăç пайĕнчи хуласемпе ялсем çине варварла тапăнма пăрахмаççĕ ха. Çентаберĕн 1-мĕшĕнче йапонĕцсем Фыншунь çине икĕ сехет хушши бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе 200 çын ытла вилнĕ, 80 çурта ишĕлтерсе йатарнă.

(ТАСС).

„Берлинран панă инструкцисем"
Б. Ипатăв ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Йапони авиацийĕн тискерлĕхĕсем

Цзиншань хулинчи (Ханькоуран çурçĕр-хĕвеланăçнеле) общĕствăлă организацисем унта пурăнакан 500 пин çынлă халăх ячĕпе Китай правительстви патне телеграммă йанă. Вăл телеграммăра Йапони авиацийĕ хулари лăпкă пурнăçпа пурăнакан халăхсене тискеррĕн пĕтерсе тăкни çинчен тĕнчери общĕствĕннăçа пĕлтерме ыйтнă. Цзиншань хули вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе нимĕнле паллă вырăн та йышăнмасть: пĕтĕм хулипе те кунта пĕр салтак çук. Апла пулин те, августăн 29-мĕшĕнче Йапонин 50 самолйочĕ хула çине вĕçсе пырса, 200 ытла бомбă пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе 2 пин çурт ытла ишĕлсе йанă. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ 4 пин çынран иртет.

(ТАСС).

Прагă хулинчи компарти активĕн пухăвĕ

Чехословакишĕн халĕ питех те йăвăр вăхăтра Прагăри пролетариат питĕ те лăпкă тата шиксĕр пурнăçпа пурăнать. Сасартăк хăраса ӳкни Прагăри предприйатисенче пĕринче те çук. Çав вăхăтрах фашисла захватчиксене отпор пама пĕрлĕх тума тăрăшни хыттăн палăрать.

Çак кунсенче пулса иртнĕ Чехословаки компартин хулари актив пухăвĕ, унта Прагăри хапрăксемпе савăтсенчи рабочисен представительĕсем пин çын ытла пулнă, Прагăри рабочи массисен ирĕкĕпе шухăш-кăмăлĕсене уççăн кăтартса панă. Пуху Чехословакири компарти генлейнла партин провокацийе терророрла ĕçĕсене хирĕç тата фашисла Германи агрессине хирĕç кĕрешме халăх массисене мобилизацилекен политикине пĕр кăмăллă ырланă.

(ТАСС).

ПАРИЖРИ МИТИНГ

Çентаберĕн 2-мĕшĕнче Парижре 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен калакан саккуна пăснине хирĕç протеслесе митинг пухнă. Митинга Париж районĕнчи профсойузсен пĕрлешĕвĕ пуçарнипе пухнă. 30 пин çынна йахăн вырнаçакан велодром шăпах тулса ларнă. Ытлашши çын нумайипе митинг пулнă çурта кĕреймен вуншар пин ĕççыннисем: „Епĕр 40 сехетлĕ ĕç ернине хăварма ыйтатпăр!", „Тĕп пултăр саккунсăрлăх!", „Çĕршыври хăрушсăрлăх ĕçне соботаж тăвакансене тĕрмене!" текен лозунгсемпе урамсенче демонстрацисем тунă. Митинга пынисен хисепĕ 50 пин çынран иртет.

Митингра тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче ĕçлĕхĕн пĕтĕмĕшлĕ конфедерацийĕн çекретарĕ Ракамон çапла каланă: „Пĕтĕм социаллă саккунлăха хальхи вăхăтра хăрушлăх умне тăратнă. Çак саккунлăха сыхламала. Ĕççынни массисен социаллă саккунлăха хăйсен пурте пĕр шухăшлă тата организацилĕ ĕçĕсемпе сыхламала".

Францири компартин Тĕп Комитет çекретарĕ депутатсен палатин вице-председателĕ Жак Дюкло тухса каланине митинга пухăннă халăх кăмăллăн ырланипе кĕтсе илнĕ. Вăл: „рабочи класа фашисла заговорщиксене ирĕке кăларакансен вĕрентĕвĕ кирлĕ мар",—тенĕ.

Митингра фашисăма хирĕç кĕрешекен халăх фронтне кĕрекен тĕрлĕ организацисен представительĕсем тухса сăмах каланă.

Рабочисем 40 сехетлĕ ĕç ернине хӳтĕлес тĕлĕшпе тунă демонстрацисем Гавр, Руан, Амйен, Нант, Труа тата. Францири ытти хуласенче те пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Германи Чехословакине хăратать

Çентаберĕн 2-мĕшĕнче Берхтесгаденре (Германи) Чехословакири Судет-Нимĕç партийĕн пуçлăхĕ Генлейн хăйĕн хуçипе — Гитлĕрпа тĕл пулса калаçнă. Калаçнă чухне вĕсемпе пĕрле Германин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп та пулнă.

Вĕсем „пĕр шухăшлă" пулнине çак тĕслĕх лайăх кăтартса парать: Германи пичечĕпе радио Чехословакине хирĕç çĕнĕрен урса кайсах кампани пуçласа йанă. Пуринчен ытла Германи пичечĕ Чехословаки правительствин çĕнĕ сĕнĕвĕсем çине тапăнать. „Берлинер Берзеннейтунг" ятлă хаçат Германи правительстви „Судет-Нимĕç проблемин мăтăвне тĕпренех татса пама" шухăшланине паллă тăвать. Хаçат Чехословакин тулашри политикине улăштарасси çинчен калакан требованине уççăнах кăларса тăратать. Çак улшăнăва тумасăр „Судет-Нимĕç проблемине мирлĕ майпа татса пама май çук",—тесе çырать хаçат.

Германи правительстви йулашки вăхăтра хĕвеланăçри чикĕсем патĕнче тăвакан мĕн пур ĕçсем, Чехословаки чиккисем патне çĕнĕ çарсем кӳрсе килни çинчен калакан хыпарсем — çентабĕр уйăхĕ варринче Гитлĕр „татăклă кунсем" туса иртерме палăртни çинчен калаççĕ. Генлейна та вăл çакăн майлă „инструкцилене" пулас.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Шупашкар организацинчи коммунниссен пухăвĕ

Çентаберĕн 3-мĕшĕнче, Строительсен клубĕнче Шупашкар хули парторганизацинчи коммунисĕн пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕн ĕçĕсем çинчен ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Хула Комитет çекретарĕ,— Иванов йулташ доклад туса пачĕ.

Иванов йулташ докладра ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ хайĕн пĕтĕм ĕçĕсене пĕр шухăшлă, пĕрлĕхлĕ пулса татса панине палăртат. Çакă вăл Совет халăхĕ Ленин - Сталин партийĕпе халăхсен çулпуçĕ, аслă Сталин тавра, совет правительстви тавра хурçа пек çирĕп пĕтĕçсе тăнине, партипе правительствă тĕнчери ыйтусемпе хамăр çĕршыври ыйтусем тăрăх тытса пыракан политикăна ырланине кăтартат.

ССРС Верховнăй Совечĕн II-мĕш Çессийĕ пĕтĕм социалисăм çĕршывĕшĕн пысăк выранта тăракан саккунсем йышăнса хăварчĕ.

ССРС Верховнăй Совет депутачĕсем социалисăмлă государствăн бӳлжечĕ çинчен, ССРС, союзлă тата автономлă республикăсен судоустройстви çинчен, ССРС Верховнăй Советне суйлаçси çинчен, ССРС гражданстви çинчен, ССРС урăх çĕршывсемпе тунă договăрсене ратификацилес тата денонсацилес йĕрке çинчен, уйрăм хуçалăхсен лăшисем çине государствă налогĕ хурасси çинчен, Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставки çинчен саккунсем йышăнса тата ССРС Верховнăй Совечĕ Сталин йулташăн соратникĕсене—Л. М. Кагановичпа Н. И. Йежов йулташсене çĕнĕ назначенисем парасси çинчен кăларнă указсене çирĕплетсе нумай мĕлйунлă совет халăхĕн шухăщĕпе кăмăлне пурнăçа кĕртнине кăтартрĕç. Çакăн пек тунипе вĕсем социалисăмлă тăван çĕршывăн малашлăхĕшĕн, ĕççынnисен кулленхи интересĕсемшĕн тăнине кăтартрĕç.

Пренире тухса калакан йулташсем (Золотников—Финанс Халăх Комиссариачĕ, Иванов—Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ, Петров—Çыхăну, Маркова—ВКСХШ, Орепин—Государствă банкĕ, Окулăв—Заготзерно, Филиппăв—Йустици Халăх Комиссариачĕ, Андрейĕвă—ЧАССР Верховнăй Совет Президиум председателĕ, Йаблонко, Братчиков—суту-илӳ организацинчен) ССРС Верховнăй Совечĕн II-мĕш Çессия йышăннă саккунсене пурте пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ.

Пренире тухса калакан йулташсем хуçалăх, суту-илӳ, финанс ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене критиклесе вăл çитменлĕхсене пĕтермели майсене кăтартрĕç.

Иванов йулташ доклачĕ тăрăх йышăннă резолюцире пуху ССРС Верховнăй Совечĕ йышăннă саккунсене ырлат.

ССРС Верховнăй Совечĕн II-мĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене масса патне çитерни, вĕсем çинчен массăна тĕрĕс ăнлантарса пани тăрăх халăхăн политикăлă тата производствăлă пултарулăхне хăпартса, умра тăракан пур ĕçсене те вăхăтра туса пымала тăвасси—парти организацисем умĕнче вирлĕрен те вирлĕн тăракан задачă. Çавăнпа та Шупашкар хулинчи парторганизаци пухăвĕ пур пуçламĕш парторганизацисене те ССРС Верховнăй Совечĕн II-мĕш Çессин материалĕсемпе вăл йышăннă саккунсем çинчен ăнлантарас ĕçе организацилеме хушрĕ.

Обйазательствăсене пурнăçламала

ШĂХАСАН. Совет çамрăкĕсен историлĕ, чаплă уйавĕ çывхарат. Комсомолĕцсем уйав йачĕпе хамăрăн тăван çĕршыв-анне вăльли хаклă парнесем хатĕрлеме хăйсем çине конкретлă обйазательствăсем илсе, вĕсене ĕçре пурнăçласа пыраççĕ.

Туçи Чуракассинчи „Правда" колхозри комсомолĕцсем Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри комсомолĕцсен çырăвне сӳтсе йавнă хыççăн, тырпулсене кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе, колхоза малти вырăна кăларас тесе хăйсем çине обйазательствăсем илнĕ. Тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра комсомолĕцсем чăнахах та хăйсен хастарлăхне кăтартрĕç. Константинăвпа Улахăв комсомолĕцсем машинăпа тыра вырнă çĕрте ĕç нормине кулленех 140—150 процент тултарса пынă. Ытти комсомолĕцсем те тăрăшса ĕçленĕ. Çапла вара комсомолĕцсем колхоза районра малта пыракан колхозсемпе танлашма пулăшнă.

Районри 74 комсомол организацирен 58 организаци уйав йачĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине обйазательствăсем илнĕ. Анчах Троицк, Çĕнĕ Мами, Чулкăмака, Имелевăç т. ыт. организацисенче комсомолĕцсем хăйсем çине илнĕ обйазательствăсем çинчен мансах кайнă. Çĕнĕ Мамири Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса комсомолĕц Куçков йулташ ĕçлет. Колхоз тырпулсене пухса кĕрес ĕçре кайа йулчĕ. Куçков йулташ государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçласа пырас ĕçре те чăрмантарса пырат, вăл ку таринччĕнех иртнĕ çулхи йалхуçалăх налогне тӳлемен.

Хăй çине илнĕ обйазательствăсене пурнăçласа пырасси—комсомолĕцăн хисеплĕ ĕçĕ.

А. Соловйов.

Финанс çекцийĕнче

ЕЛĔК. Уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче Чăваш Сурăм йалсовечĕн çекцисемпе депутат групписем нумайăшĕ ĕçлеме пăрахнă пулнă. Çавăн пекех финанс çекцин ĕçĕ те сӳнсе ларнăччĕ.

Халĕ ку çекци кăштах хускалма пуçларĕ. Финанс çекци халĕ йатарласа „Кĕрешӳ" йатлă çтена хаçачĕ кăларма тытăнчĕ. Вăл уйăхра икĕ хут тухат.

Çекци членĕсем хальхи вăхăтра ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса параççĕ. Лашалă йединоличниксем çине налог хума йышăннă саккун çинчен ăнлантарса панă хыççăн, йединоличниксем хушшинче колхоза кĕрес кăмăл пурри палăрат. Чăваш Сурăмри йединоличник Леонтйĕв Димитрий çемйипех (5 йатакпа) колхоза кĕчĕ. Çавăн пекех çак йалсовета кĕрекен Анатри Хурасанта пĕр йединоличник хуçалăхĕ — Александрăвă Марфа колхоза кĕчĕ. Колхоза кĕрес тенкенсем татах та пур.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ финанс бӳджечĕ çинчен йышăннă саккуна ăнлантарса панă май, колхозниксем налог укçине вăхăтран малтан тӳлесе татма пуçларĕç. Пайанхи кун тĕлне йалсовечĕпе 10—15 хуçалăх налог укçине пĕтĕмпех парса татнă. Тури Хурасанри колхозник Паладйĕв Макçим налог укçине пуринчен малтан парса татнă. Ун хыççăн З. Федăрăв, Т. Çеменăв, М. Димитрийĕв, М. Куçмин т. ыт. те налог укçине парса татнă.

Укçа-тенкĕ пухас йĕнĕпе хальхи вăхăтра уйрăмăнах пысăк ĕçсем тумалине шута илсе, йалсоветăн финанс çекци çине тата хытăрах пăхмала. Анчах çакна йалсовет членĕсем пурте тĕплĕн ăнланса илмен-ха. „Йанăш" колхоз председателĕ Потапăв Трофим, колхозран илмели тупăш налогĕ 3 квартăл хушшинче 715 тенке çитнĕ пулсан та, çак укçана парса татма васкамаст.

Йалсовет членĕ Орлов Валентин хăйĕн 1937 çулхи парăмĕсене те тӳлесе татман. Çавăн пекех йалсовет членĕ—Лебедĕв Федăр, колхоз бригадирĕ—Флегентăв Алекçей укçа-тенкĕ тӳлевĕсене вăхăтра памасăр чăсса тăраççĕ. Çак ĕçре ытти колхозниксене пример кăтартма кирли çинчен маннă вĕсем.

А. Б.

Виççĕмĕш квартăл планне тултарнă

Протопопихăпа Усаткă йалсовечĕсенче (Шупашкар р.) налог агĕнчĕ пулса Мурмин йулташ ĕçлет. Вăл комсомолĕц, районри финанс пайĕ çумĕнчи комсомол комитечĕн членĕ. Финанс ĕçĕнче нумайранпа ĕçлет.

Мурмин йулташ агĕнт ĕçне çак çулхи августăн 8-мĕшĕнче тытăннă. Протопопихă йалсоветне килсен йалсовет пленумне туса иртернĕ. Çак пленумра 3-мĕш квартăлти финанс планне сӳтсе-йавнă. Кун хыççăн колхоз председателĕсемпе, бригадирсемпе, зайом уполномоченнăйĕсемпе, финанс çекци членĕсемпе тачăн çыхăнса ĕçлеме пуçланă. Кунпа пĕрлех активпа пĕрле массăлă ăнлантару ĕçне лайăх туса пырат. Укçа-тенкĕ социалисăм строительствинче пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ĕççынnисене ăнлантарса парат.

Протопопихă йалсоветĕнче виççĕмĕш квартăлта укçа-тенкĕ пухмали плана августăн 28-мĕшне 123,1 процент тултарчĕç. План тăрăх 19.692 тенкĕ пухмала пулсан, 24 251 тенкĕ пухнă. Халĕ налог агĕнчĕ Мурмин йулташ хăй ĕçлекен Усаткă йалсоветĕнче те финанс планне срукчен тултарассишĕн çине тăрса ĕçлет.

Федăрăв.

Финанс планне тултаратпăр

ВĂРМАР. Районри чылай йалсоветсенчи колхозниксемпе йединоличниксем 1938 çулхи йалхуçалăх налогĕ, страховкă укçисене срукчен тӳлесе татаççĕ. Пăвакассинчи Калинин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем: Павел Антонăв, Димитрий Андрейĕв йулташсем налогпа страховкă тӳлемели çинчен пĕлтерӳсем алла илсенех укçине тӳлесе татрĕç. Чăраш çырмари Григорий Василйĕв, Александр Александрăв, Василий Табаков, Алексей Краснов йулташсем те, 1-мĕшпе 2-мĕш срук семшĕн çийĕнчех парса татрĕç. Пысăк Иенкассинчи „Трактăр" колхозри Николайĕв йулташ налогпа страховкă укçисемпе пĕрлех Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом укçине 100 тенкĕ пĕтĕмпех тӳлесе татрĕ.

Налог, страховкă, зайом укçисене срукчен тӳлесе татнă çынсем ытти йалсенче те нумай.

В. Алендейĕв.

Укçа пухассине хакламаст

Кăпас йалсоветне кĕрекен (Тутаркас р-нĕ) „Заря" промколхозра Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом укçине пухасси питĕ йапăх пырат. Ертел членĕсем 2.740 тенкĕлĕх çырăннă пулсан, укçа 50 тенкĕ çеç пухнă.

Промколхоз членĕсем „Дуб" ертелĕнче ĕçлесе укçа нумай илеççĕ. Зайом укçи пухма кирлĕ условисем пур. Анчах та зайом уполномоченнăйĕ Иван Самушков зайом укçи пухас тĕлĕшпе ĕçлемест.

С. Т. Савелйĕв.

Преподавательсем отпускра...

Вăхăт кĕмест, теççĕ. Кĕтмест çав вăхăт. Ăна тытса чарнă пулĕччĕç пирĕн искусствă çыннисем. Çемçен, ăшă кăмăлпа, йăпатса, купăс çемми кĕввисемпе тытса чарнă пулĕччĕç. Вара тĕрлĕ хуласенчи „Кафесенче" çентабĕр сулхăнĕпе уçăлса ларнă пулĕччĕç. Кĕтмест вăхăт. Çитрĕ çентабĕр те... Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ.

Пирĕн академи театрĕн сцени çинче хăш-пĕр чух, ну, калăпăр час часах та, чăвашсен филармонийĕ темле вăрăм увертюрăсем парат. Унта, халăха çывратса йамала çемĕсене итлесе ларсан-ларсан, сасартăк барабанĕ мĕнĕпе аслати аватнă пек кĕрлеттерни йантрама пуçлат. Çавăн пек йанраса кайрĕ календарăн çентабĕр листине уçнă сасă Чăвашсен музăкă училищипе искусствă комитечĕшĕн.

Çентаберĕн 1-мĕш кунĕнчех (ситменнине тата ирех, 9 сехет çитиччен) училищăна ачасем пырса тулчĕç. Коридор тăрăх хăвăрт утса çӳреççĕ, класран-класа кĕрсе тухаççĕ, çӳлти хута хăпарса анаççĕ. Директăр кабинечĕ йĕннеле, канцелари алăкĕ çинеле пăхаççĕ. 9 сехет.. 12... сехет те çитет.

— Пирĕн преподаватель çук,—тени илтĕнет.

— Пирĕн те.

— Чăваш чĕлхи преподавателĕ ăçта?

— Отпускра,—ответ илеççĕ кĕскен.

— Физикĕ?

— Çук. Пăрахса кайрĕ.

Скрипкăна тата ытти темиçе тĕслĕ музыкă предмечĕсемпе занятисем пулмарĕç. Мĕншĕн çапла?

Епĕр училищă, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, вĕренӳ çулне авантах хатĕрленнĕ терĕмĕр. Паллах ĕнтĕ, хуçалăх йĕнĕпе. Ку тĕлĕшпе хурламалах мар. Кадр йĕнчен училищăна çирĕплетмеле.

Пайанхи куна (5-мĕш кун ĕнтĕ вĕренме пуçлани) училищăн 11 преподаватель çук. Училищă хулари станцисене (пристăне, автовакзала) çывăх тăнипе Атăл тăрăх иртекен кашни пăрахутпа, Канаш йĕнчен килекен кашни машинăпа преподавательсем килессе кĕтет.

— Вот-вот килмеле... Çул укçисем те куçарса панă.

Çук, килмеççĕ преподавательсем. Искусствăсен Комитечĕ мĕнле чунпа тăрат-ши? Пĕр училищăра (унăн ведăмствинче мĕн пурĕ те виçĕ шкул) 11 преподаватель ĕçе тытăнман. Кунта акă мĕн калаççĕ: преподавательсем килмеле. Килеççĕ вĕсем („ну, çентаберĕн йулашки кунĕсенче, может быть"). Скрипачсем, пианиссем те пулаççĕ, анчах халь вĕсем отпускра...

Ку вара питех те тĕлĕнмеле йапала. Анчах мĕншĕн-ха апла? Имĕш!

— Вĕсем филармонинче ĕçленĕ. Филармони вĕсене отпуска йанă.

Кăçалтан пуçласа искусствă шкулĕсенче пур предметпа та 10 клас программи чухлĕ вĕрентме тытăнмала. Ку пирĕн музыкă училищи умне пысăк та ответлă задачă кăларса тăратат. Апла пулсан, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусствă Комитечĕн хăйĕн ведомствинчи шкулсен ĕçне лайăхлатмала.

В. Д-н.
Н. К.

Вĕренӳ пахалăхĕ тивĕçлĕ вырăнта пулмала

Канашри педучилищăна кăçал çĕнĕрен 175 ача вĕренме кĕчĕç. Иртнĕ çулхи çитменлĕхсене шута илсе, кăçалхи вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах, шкулсене вĕренӳ пахалăхĕшĕн мĕн пур вăйа хурса кĕрешесси çинчен асăрхаттарас майпа, пĕлӳ тĕрĕслевĕсен итогĕсемпе паллаштарасшăн.

Канаш педучилищине илме ыйтса мĕн пурĕ 613 çын зайавлени панă. Вĕсенчен 105 ача отличниксем. 508 ача пĕлӳ тĕрĕслевĕнче пулмала пулнă. 59-ĕш ик-виçĕ предметпа тĕрĕслӳре пулнă хыççăнах пăрахса кайнă.

Зайавленисене Канаш, Шăхасан, Вăрмар, Тăвай, Куславкка, Йĕпреç, Вăрнар, Çĕмĕрле, Патăрйел, Çĕрпӳ, Елĕк, Турхан, Хĕрлĕ Чутай, Трак, Сĕнтĕрвăрри тата Иетĕрне районĕсенчи шкулсенчен вĕренсе тухнă ачасем пынă.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕнче мĕнпурĕ 449 ача пулчĕç. Кунта акă мĕн палăрчĕ: вĕренме кĕрес текенсем пуринчен ытла вырăс чĕлхине, математикăпа тата Конституципе начар пĕлеççĕ. Сăмахран, математикăпа ыйтнă чух хăшĕсем 25×10 мĕн чухлĕ пулнине те тĕрĕс калаймаççĕ.

Географипе—кунпа çĕр мĕнле пулнине, масштаба, компăса пĕлмеççĕ. Картă çинче шывсене, çĕр пайĕсене, утравсене, тинĕссене тĕрĕс тупса кăтартаймаççĕ.

Чăваш чĕлхипе ачасем вăтамăн аван çыраççĕ темеле. Анчах, сăмах ушкăнĕсене тупма начар пĕлеççĕ. Определени, дополнени, обстойательствăсене нумай шкулта вĕрентмен те пулас. Хушаматсене çырнă чух йанăшсем нумай тăваççĕ. Сăмахран, диктантра Йермолайĕв сăмаха: Йермăлайĕв, Йермулайĕв, Ирмалайĕв, Ермолайĕв, тесе çыриисем тĕл пулаççĕ.

Ытти йанăшсенчен çаксене палăртмала: хупă сасă вăрăмланнине час-часах пĕр саспаллипе çыраççĕ. Сăмахран, тĕтĕмленет (тĕттĕмленет), алисем (аллисем), паламан, хĕринче, вăйланăçемĕн, çитменине т. ыт. Ч умĕн ль çыраççĕ: Шальча (шалча вырăнне). Сăмахсене вĕçлессипе илсен, падежсен ыйтăвĕсене пăтраштараççĕ.

Вырăс чĕлхипе нумайăшĕ начар çырнă. Группăри 30—35 ачаран 5—12 çеç „посредственно" йе „хорошо" паллăсем илнĕ.

Йанăшсем, пĕр йĕнчен, вырăсла начар пĕлнипе пулаççĕ, хăшпĕр сăмахсене халиччен илтмен пирки, мĕнле илтнĕ çапла çырса хураççĕ. Тĕслĕх: „безплощатное солнце, недущий—гнедущий (гнетущий), окриг, зердитый, газатся, разинув род" т. ыт. те.

„Внушала" сăмаха тĕрлĕ ача тĕрлĕрен çырнă: „вкушала, влужала, нужала" т. ыт. те.

Хăш сăмах çаврăнăшĕсене, тĕрес çырманнипе, шухăшне те ăнланмала мар туса хураççĕ. Тĕслĕх: старые дамары (старые да малые), сернистый кокрий хозяина (сердитый окрик хозяина).

Вырăсла вĕçлессине те питĕ начар пĕлеççĕ. Сăмахран, йат падежĕнче: черный собак, большой школ, большой дерево т. ыт. тесе çыраççĕ.

Литературăпа илсен, программăра кăтартнă басньăсене, сăвăсене пурне те пĕлекеннисем пĕр ача та çук. Майаковскин „Кем быть" йатлă произведенине туллимар вăтам шкултан тухакан ачасен пĕлме кирлех. Ку сăвва пĕр шкул та вĕрентмен. Çавăн пекех „Волк и ягненок" басньăна та пĕр ача та калаймарĕ.

Çавăнпа та пĕлӳ тĕрĕслевне 449 ачаран пĕр начар отметкăсăр 21 ача çеç тытрĕç. Ыттисен йапăх паллăсем — пĕрререн пуçласа 9 çити.

Ку ĕнтĕ пирĕн çак кунсенчен тытăнсах вырăс чĕлхипе, математикăпа тата ытти предметсемпе те хытăрах ĕçлеме кирлине кăтартса парат. Асăннă çитменлĕхсене пĕтересси учительсен чи пысăк задачи пулса тăрат.

Ф. Меценатăв.

Вăрманлă республикă

(Сыктывкартан килнĕ çыру)

Коми АСС Республикине тивĕçлипех „вăрманлă республикă" тесе калаççĕ. Вăл, Çурçĕрти Уралран Таманри сăртла крйаж таран тата Польăр уникинчен пуçласа Вычегдă йуханшыв бассейни таран сарăлса выртакан республикăн пысăкран та пысăк территорийĕн икĕ виççĕмĕш пайне çурçĕрти чăтлăх вăрмансем йышăннă.

Коми АССР Совет Сойузĕн Йевропăри Çурçĕревчи пысăкран та пысăк вăрман никĕсĕсенчен пĕри пулса тăрат. Республикăри вăрмансен пĕтĕм талккăшĕ 27,4 мĕлйун гектар шутланат. Ӳссе çитнĕ тата ӳссе пыракан йăвăççен запасĕ кăна кунта мĕлйард кубла метр ытла шутланат.

„Вăрманлă республикă" вăрман експорчĕ йĕнĕпе чи ответлă задачăсене пурнăçа кĕртет, Совет Сойузĕн чи пысăк строительствисене вăрман материалĕсем парса тăрат. Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче вăл социалисăмлă çĕршыва 34 мĕлйун кубла метр йăвăç панă.

Социалисăм строительствин интересĕшĕн вăрманăн пысăк пуйанлăхĕсемпе тĕрĕс усă курасси коми ĕççыннисемшĕн чыслăх ĕçе пулса тăчĕ.

Вăрман промышленнăçĕнчи ударниксемпе стахановецсен çарĕ çĕршыв умĕнче тăракан хăйĕн обйазательствисене чыслăн пурнăçа кĕртет.

Кăçал республикă 8,4 мĕлйун кубла метр йăвăç хатĕрлесе вăрман хатĕрлев планне тултарат.

Республикăн пĕтĕм промышленнăç продукцинче вăрман промышленнăç продукцийĕ 56,7 процент шутланат. Вăрман хатĕрлевне кăçал 50 мĕлйун тенкĕ укçа хывнă.

Вăрманта индустри никĕсĕ ӳсет. Вăрман хатĕрлевĕнче 190 трактăр ĕçлет, 240 километр тăршшĕ трактăр çулĕ хывнă. Вăрман туртармали автомобил çулĕ тата ансăр чукунçул тăваççĕ.

Вăрман касакан рабочисен çуртйĕрне йăла условисем йăлтах улшăннă. Вăрманта рабочисен лайăх поçолкисем ӳссе ларнă. Вăл поçолкăсенче аслă та çутă çуртсем, клубсем, столовăйсем, магазинсем, мунчасем тунă. 1937 çулта кăна „Комилес" трестчĕ вăрманта 57 пин тваткăл метр пурăнмали çуртсем, 23 столовăй, 78 клубсемпе хĕрлĕ кĕтессем, 100 мунча т. ыт. те тунă. Кăçал уйрăмăнах культурăпа йăла строительстви анлăн пырат. Кадрта тăракан çемйелĕ рабочисем валли вуншар çĕнĕ общежитисем, 4 хватерлĕ çуртсем (кашни хватерте икшер пӳлĕм, кухнь) тăваççĕ.

Вăрман промышленнăçĕнчи çынсем, стахановецсем ӳсеççĕ. Вăрман касакан паллă рабочи, Коми АССР Верховнăй Совет депутачĕ, Пĕрремĕш Çессире республикăн Верховнăй Совет Председателĕн заместителĕ пулма суйланă Илья Йакăвлĕвич Жиганăв иртнĕ çезонра 5.100 кубла метр вăрман хатĕрленĕ. Вăрман касакан рабочи-стахановецсем Афанасий Йакăвлĕвич Йайцĕв, Федăр Петрович Шчапăв, Иван Василйĕвич Мелехин кашнийĕх 5 пин кубла метртан пуçласа 5.500 пин кубла метр таран вăрман хатĕрленĕ. Кун пек кисем нумай. Коми республикĕнчи вăрман касакан пиншер рабочисем, техникăна, ĕçĕн стахановла метăдне алла çавăрса илнĕскерсем, кашни кунах ĕç паттăрлăхĕн чаплă тĕслĕхĕсене кăтартаççĕ.

Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче Çурçĕрти ахаха—Печорăна промышленнăç йĕнĕпе алла çавăрса илес тĕлĕшпе нумай пысăк ĕçсем тунă. Печорă халь индустрилĕ пысăк район, ССР Сойузĕн Йевропăри Çурçĕрĕнчи çунтармали продукцисем паракан никĕс пулса тăрат. Ухтă районĕнче нефт промыслисем ӳснĕ. Кунта çĕршер нефт вышкисем, нефт йухтаракан тата ремонтно-механическкă савăтсем, електростанцисем ĕçлеççĕ. Çурçĕрти социалисăмлă çĕнĕ хула—Чибйу—Совет Çурçĕрĕнчи нефт промышленнăçĕн центрĕ кунпа мар, сехет тăрăх ӳсет.

Печорă çинче çавăн пекех тата хăйĕн виçисем тĕлĕшĕнчен пысăк запаслă çĕр кăмрăк вырăнĕсем тупса палăртнă. Геологи разведки пахаланă тăрăх вĕсен запасĕсем 250 мĕлйард тоннă шутланаççĕ. Кунта, Инçетри Тундрăра, Воркут йуханшывĕ çывăхĕнче, полярти çĕнĕ хулана— Воркута—çурçĕрти промышленнăçăн çĕркăмрăк центрне тунă.

Республикăра промышленнăç масштабĕсенче радиоактивлă шывсем тупас ĕç пырат ĕнтĕ. Çунакан тата хаклă газсене тупас ĕçе алла çавăрса илеççĕ. Ижма йуханшывăн тури тăрăхĕнче асфальтитсем тума тытăннă. Вĕсем лакпа сăр промышленнăçĕ валли пысăк пахалăхлă чĕртаварсем параççĕ. Уствойере хăйрамали хатĕрсем тăвакан хапрăк ĕçлет. Усть-Цильмăри замше савăтĕнче пăлансен чĕртаварĕсенчен тĕрлĕ таварсем тăваççĕ. Йăвăç каскалакан промышленнăçа çĕнĕрен тунă—Сыктывкарта хăма çуракан икĕ çĕнĕ савăт ĕçлет.

Республикăн çулĕсем тăрăх çĕршер автомобилсем чупаççĕ. Государствăн авиалинисем ĕçлеççĕ. Аероплансем Сыктывкар—Котлас, Архангельск—Усть-Цильмă—Уса хушшинче вĕçеççĕ.

Коми АСС Республикĕнче, пĕтĕм Сойузри пекех, телейлĕ те тулăх пурнăçлă колхоз стройĕ çĕнтернĕ. Малта пыракан хăватлă техникăна йалхуçалăхне кĕртни тырпул тухăçне чылайах ӳстерчĕ. Инçетри Çурçĕрти чылай районсем хăйсен тыррисемпех тăрансах пурăнаççĕ. 1937 çулта чылай колхозсенче пĕрчĕлĕ тата пăрçа йышши культурăсене гектартан 18—20 центнер таран, уйрăм культурăсене 30 центнер таран туса илнĕ. Вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе малта пыракан „Звезда", „Базис" тата ытти чылай колхозсем те Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма права кĕрешсе илнĕ.

Ленинла-сталинла наци политики коми халăхĕн культурипе тулăх пурнăçне нихăçанхи пек те мар чечеклентерчĕ. Вăл халăх патша вăхăтĕнче вилсе пĕтесси патнех çитсе тăнă пулнă. Коми АСС Республикĕ талкăшпе хут пĕлекен пулса тăрат. 1937 çул пуçламĕшĕнчех пĕтĕм халăхран 95 процентчĕ хутла пĕлекен пулнă, нумай шкулсем, культурăпа çутĕç учрежденисем уçнă, аслă шкулсем ĕçлеççĕ. Халăх сывлăхне сыхлассипе питех те пысăк ĕçсем тунă. Халăха медицинăпа санитари йĕнчен пулăшасси тĕпренех улшăннă.

„Вăрманлă республикă" умĕнче илĕртӳлĕ малашлăх уçăлса выртат. Çитес вăхăтрах çĕнĕ чукунçул магистралĕ пĕтĕм промышленнăçлă центрсене Совет Сойузĕпе çыхăнтарат. Чертре—Вычегдă—Печорă—Камă аслă шывçулĕн пысăкран та пысăк строительстви тăрат. Вăл шыв çулĕ республикăна пилĕк тинĕспе—Шурă, Баренцовă, Каспи тинĕсĕсемпе тата Атăл—Дон каналĕ тăрăх Азовпа Хура тинĕссемпе çыхăнтарат. Çĕнĕ пысăк промышленнăç строительстви валли пройект тăваççĕ.

Ун чухне Коми Автономлă Советлă Республикĕ татах та лайăх чечекленет, çĕнĕрен çуралнă телейлĕ те ирĕклĕ коми халăхĕ, патша вăхăтĕнче варварла колонилĕ пусмăр айĕнче пăчланнăскер, тата лайăх та тулли пурнăçпа пурăнма тытăнат.

А. Авдейĕв.

Сыктывкар хули, Коми АССР. 1938 çулхи август уйăхĕ.

Çтена хаçачĕ кăларнă

Шупашкарти 2-мĕш №-лĕ вăтам шкулта 628 ача вĕренет, вĕсенчен 54 ача çĕнĕрен илнисем. Икĕ уйăх каннă хыççăн, çентаберĕн 1-мĕшĕнче ачасем çĕнĕ вăйпа вĕренме тытăнчĕç. Шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илчĕ.

Вĕренӳ çулĕн пуçламĕш кунне чысласа шкула хĕрлĕ йалавсемпе лозунгсем çакса илемлетнĕ. Кашни класрах сĕтелсем çинче чечексем, çтенасем çинче партипе правительствă руководителĕсен сăнĕсем.

Пионерсем „Сталинское отлично" йатлă çтена хаçачĕ кăларнă. Çтена хаçатĕнче ачасем каникула мĕнле ирттерни çинчен тата Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине отличнă вĕреннипе кĕтсе илесси çинчен çыратнă. Шкулта вĕренекен ачасем валли „кафе" организаціленĕ.

Августăн 30-мĕшпе 31-мĕш кунĕсенче ача ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Кунта учительсем ача ашшĕ-амăшĕсене иртнĕ çулсенче вĕренӳре пулнă çитменлĕхсен—пĕр класрах икĕ çула йуласси пĕтерес ĕçре пулăшса пыма чĕнчĕç.

Çентаберĕн 1-мĕш кунĕ вĕренекен ачасемпе пĕрлех ача ашшĕ-амăшĕсемшĕн те чи аслă уйав пулса тăчĕ.

С. Константинăв.

Клубсем хупă тăраççĕ

Вăрнар поçолкинче икĕ клуб пур. Кусем поçолкăра пурăнакансен пушă вăхăтне культурăлă, лайăх ирттерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăмала. Анчах пайанхи куна клубсем хăйсем çине хунă тивĕçлĕхе пурнăçласа пыраймаççĕ-ха. Уйрăмăнах вĕсем йулашки уйăхсенче йапăх ĕçлеме пуçларĕç. Акă поçолкăри клуб заведуйушчи çук пирки, икĕ уйăх ĕнтĕ хупă тăрат.

Зубровский.

Выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи социалисăмлă ăмăртăва сарса пырасси çинчен

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Çĕрĕç органĕсенчи работниксен Профсоюз Тĕпкомĕн постановленийĕ

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсоюз Тĕпкомĕ Харьковă облаçĕнчи (Украина ССР) Хотеньск районĕнчи колхозниксем Совет Союзĕнчи мĕн пур колхозниксене выльăх-чĕрлĕх ĕçĕпе Пĕтĕм Союзри социалисăмлă ăмăрту организацилеме чĕннине хĕрӳлĕн саламлаççĕ. Хотеньскри колхозниксем хăйсем çине: выльăхсене хĕл каçарма кăтартулăн хатĕрленес выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри государствă планне ăнăçлăн тултарас тата выльăхăн продуктивлăхне ÿстерес обязательствăсем илнĕ.

Иккĕленмели çук,—çак чĕнĕве колхозниксемпе колхозницăсем тата выльăх-чĕрлĕх совхозĕсенчи работниксем хапăл туса йышăнĕç.

Союзлă тата автономлă республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссарĕсем, крайсенчи, облаçсенчи тата районсенчи çĕрĕç пайĕсен начальникĕсем, çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсоюзĕн облаçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи комитечĕсен председателĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи социалисăмлă ăмăртăва çĕнĕрен çĕклентерсе йăрас ĕçре организаторсем пулмала, вĕсем ăмăртăва кашни кунах оперативлă йĕртсе пымала тата ăмăртури результатсене çирĕп учота илес ĕçе организацилемеле.

ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе профсоюз Тĕпкомĕ государствă планне пурнăçа кăтартулăн кÿртнĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕçне чылайăх лайăхлатма пултарнă колхозсене, совхозсене тата районсене премилеме çакăн пек премисем тăваççĕ:

1. Ăмăртура малти вырăна çĕнтерсе илнĕ чи лайăх пилĕк районсем валли:

а) ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе профсоюз Тĕпкомĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавĕсем;

б) пĕрер çăмăл автомашинă тата икшер мотоцикл;

в) выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи работниксене премилеме 10-шар пин тенкĕ укçа.

2. Чи лайăх вунă колхоз валли, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен виçĕ совхоз, виçĕ лашасен савăчĕ, государствăн савăт вити тата племрассадник валли:

а) пĕрер автомашинă;

б) выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи работниксене премилеме 5-шер пин тенкĕ укçа.

Выльăх чĕрлĕх йĕнĕпе ĕçлекен чи лайăх наукăпа тĕпчев учрежденийĕ валли (опорнăй пункт, опытлă станци, институт), ветеринари лечебници тата районсем хушшинче ĕçлекен ветеринарипе бактериологи лабораторийĕ валли:

а) пĕрер çăмăл автомашинă;

б) работниксене премилеме 5-шер пин тенкĕ укçа.

4. Ăмăртура чи лайăх показательсем илнĕ облаçсенчи, крайсенчи çĕрĕç пайĕсенчи тата республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи выльăх-чĕрлĕх управленисем валли:

а) ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе профсоюз Тĕпкомĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавĕ;

б) виçĕ çăмăл автомашинă;

в) работниксене премилеме 10 пин тенкĕ укçа.

5. Фермă пуçлăхĕсене, бригадирсене, ĕне сăвакансене, пăру пăхакансене, скотниксене, кĕтÿçĕсене, ăратлă вăкăрсене пăхакансене, чабансене, свинарсене, коньухсене, фермăри кайăк-кĕшексене тата кроликсене пăхакансене, выльăх фельдшерĕсемпе тухтăрĕсене, санитарсене, наукă работникĕсене, опытник-колхозниксене премилеме 100 пин тенкĕлĕх фонд тăвас.

Союзлă тата автономлă республикăсенчи Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕсене, крайсенчи тата облаçсенчи çĕрĕç пайĕсене, çавăн пекех тата çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсоюзĕн облаçсенчи комитечĕсене хăйсен облаçĕсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнчи чи лайăх работниксене премилеме фондсем уйăрса хума сĕнес.

Ăмăрту результачĕсене хисепе илсе хак пама çак çынсенчен тĕп комиççи (жÿри) организацилес:

1) ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ (комиççи председателĕ);

2) Çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсоюз Тĕпкомĕн представителĕ;

3) ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи выльăх-чĕрлĕх Тĕп управленин начальникĕ;

4) ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи коневодствă Тĕп управленин начальникĕ;

5) ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи Тĕп ветеринари управленин начальникĕ;

6) Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставки комитечĕн представителĕ;

7) „Социалистическое земледелие“ хаçат редакцин представителĕ;

8) „Крестьянская газета“ редакци представителĕ;

9) М. Ф. Оноприенко—Харьковă облаçĕнчи Штеповск районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозри сĕт-çу фермин пуçлăхĕ, ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ;

10) И. Ф. Чертыгашев—Аскысск районĕнчи (Хакас автономлă облаçĕ, Краснойарск крайĕ) „Изых“ колхозри чабан, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ;

11) Ф. И. Рой—орденоносец, Краснодарск крайĕнчи Павловск районĕнчи „За мир и труд“ колхозри сысна фермин пуçлăхĕ;

12) Е. Ф. Лискун—академик, наукăпа техникăн тава тивĕçлĕ деятелĕ.

Ăмăртăвăн результачĕсен пĕрвайхи тĕрĕслевне 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнче туса иртерес. Итогсене—майăн 1-мĕшĕ тĕлне, выльăхсем кĕтĕве тухнă хыççăн, шута илес.

Колхозниксемпе колхозницăсем, выльăх чĕрлĕх совхозĕсенчи тата лаша савăчĕсенчи работниксем, зоотехниксем, выльăх тухтăрĕсем, ăслăлăх работникĕсем! Выльăх-чĕрлĕх йĕнĕпе государствă планне кăтартулăн тултарма тата выльăх-чĕрлехсен продуктивлăхне хăвăрт ÿстерме, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕх илме—социалисăмлă ăмăртăва хутшăнăр!

ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. ЧУВИКĂВ.

Çĕрĕç органĕсенчи работниксен профсоюз. Тĕпкомĕ В. ХОРОМСКАЙА.

Ĕç тухăçлăхĕ ÿсет

Канашри вакунсем йусакан саватра епĕ строительствă пуçланнăранпах ĕçлетĕп. Малтанах манăн нимĕнле специальнăç та пулман, çĕр чавнă çĕрте кана ĕçленĕ.

Савăт организацисем пулăшса пынипе йулашки çулсенче епĕ чылай ÿсрĕм. Халĕ епĕ квалификацилĕ рабочи-токăр. Техникăна алла çавăрса илнĕ май, хама панă плана ытлашшипех тултарса пыратăп. Малтанхи вăхăтрипе танлаштарсан ĕç тухăçлăхĕ чылай ÿсрĕ; туса кăларакан тавар пахалăхĕ те лайăхлансах пырать, простой, брак пулмасть. Çавна пула ĕнтĕ епĕ халĕ икшер нормă тултарса ĕçлетĕп. Акă, сăмахран, сменăра 5 обжимкă тумала пулсан, 10—12 штук тăватăп. Токăр ĕçне епĕ инструментальщикра ĕçленĕ хушăрах вĕрентĕм. Ман çумрах токăр Калашникăв йулташ ĕçлеччĕ. Йаланах çавăн патне çÿреттĕм. Вăл мана йаланах станок пайĕсем çинчен, ĕçĕн процесĕ çинчен каласа кăтартатьчĕ. Çапла вĕренсе пынипе епĕ 7 уйăх хушшинче токăр пултăм.

Халĕ манăн хавасланса ĕçлес килет. Мĕншĕн тесен токăр ĕçĕ манăн чи йуратнă ĕç.

Е. Степанăв.

Ĕçре ÿснĕ кадрсем

Вăрнар районĕнчи Ирар Ишак фосфорит шахтинче иртнĕ вăхăтсенче квалификацилĕ рабочисем çителĕксĕр пулнă. Ку производствă планне тултарас ĕçре чылай чăрмав кÿнĕ. Вăл вăхăтра шахтă плана 70—80 процент çеç тултарнă. Çавна пула вăра фосфорит савăчĕ те кайа йулса пынă.

Хальхи вăхăтра унта кадрсен ыйтăвĕ пачах та урăхла тăрать. Халĕ шахтăра иртнĕ çулсем хушшинче ĕçре ÿснĕ чаплă кадрсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче стахановла тухăçлăхпа ĕçлекенсем те сахал мар. Комсомолец Йефим Гордейĕв йĕртсе пыракан бригадă кашни уйăхра нормăна 220 процентран кайа мар тултарса пырать. Вăл бригадă çавнашкал ÿсĕмсене ĕçе лайăх организацилени пе тунă. Гордейĕв йулташ бригадă членĕсем хушшинче куллен хаçат-журналсем вуласа парать. Партипе правительствă решенийĕсем çинчен ăнлантарса парать.

Гордейĕв йулташ пек ĕçлекенсем вумай кунта. Тихушов йулташ шахтă ĕçлеме тытăннăранпах забойщик пулса ĕçлесе, пысăк квалификацилĕ шахтĕр пулса тăчĕ. Вăл нормăна 240 процент йе ытларах тултарса пырса, уйăхра 700—800 тенкĕ ĕçлесе илет.

Ĕçре ÿснĕ кадрсем халĕ вăйлă ексклаваторсемпе машинăсем çинче тата ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Вĕсем шахтă ĕçне лайăхлатсах пырассишĕн тăрăшаççĕ. Çавăнпа шахтă та иртнĕ вăхăтрипе танлаштарсан вумай лайăх ĕçлеме тытăнчĕ.

Анчах калас пулать, производствăна лайăх йĕркелесе социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма çĕклентерсех пырсан, шахтă тата та лайăхрах ĕçлеме пултарать.

Шатров.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи стахановла çирĕмкунлăх умĕн

Икĕ бригадăн ăмăртăвĕ

Ĕç кунĕ пуçланиччен тата çур сехет ытла йулнă. Çак вăхăтра Шупашкар станцин çуртне тунă çĕре рабочисем пухăнма пуçларĕç, Ильйа Николайĕвич Кузнецов йулташ стройкăна çитсенех хăйĕн бригадинчи хĕрачасене строительствă материалĕсене хăш вырăна çĕклемели çинчен ăнлантарса пачĕ те, цемент шĕвекĕ тытмали йешчĕксене вырнаçтарма пуçларĕ.

Ĕç пуçланчĕ. Кузнецов йулташ кирпĕчсене пĕрин хыççăн теприне хурса тăрать. Унăн икĕ алли икĕ ĕç тăвать. Сылтăм аллипе цемент шĕвекне, сулахай аллипе кирпĕч хурать. Станцă çуртĕн çтени минутсерен çĕкленсе пырать.

Кузнецов йулташăн ĕçĕ кашни кун ăнăçлăн пырать. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать: августăн 31-мĕшĕнче Кузнецов йулташ бригади нормăна 200 процент тултарнă. Çентаберĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кунсерен икшер нормă ытла тултарса пыма тытăннă. Нормăна 200 процентран кайа тултарни сайра кунсенче çеç пулать. Вăл та Кузнецов начар ĕçлениненчен мар, строительствă материалĕсем çитменнинчен килет.

—Вĕренни кирлĕ,—каласа парать хăйĕн ĕçĕ çинчен Кузнецов йулташ.—Каменщиксен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, строительствăра ĕçлеме тытăнсанах епĕ нормăна тултараймастăмчĕ. Мĕншĕн тесен ĕçе йĕркелеме пĕлмен. Кайран Пĕтĕм Союзĕпе палла тухнă стахановец-каменщик Наумăв йулташăн ĕç меслечĕсемпе паллашнă хыççăн, чи пирвайах ĕçе йĕркелесси çине çавăрăнса пăхрăм. Ĕç вырăнне лайăх организацилерĕм, вăра манăн ĕç ăнăçлăн кайма пуçларĕ. Нормăна та ытлашшипех тултарса пыма тытăнтăм.

Кузнецов йулташ хăй çеç мар, вăл йĕртсе пыракан пĕтĕм бригадă лайăх ĕçлет: унăн бригадине стройматериалсем тăратакан бригадă та йулашки вăхăтра нормăна ытлашшипех тултарса пыма тытăннă.

Хальхи вăхăтра Кузнецов бригади Цветков бригадипе ăмăртса ĕçлет. Вĕсем производствă планне тултарас йĕнĕпе мала тухассишĕн кĕрешессинче пĕр-пĕрне йулташла пулăшса пыраççĕ. Бригадăсене строймастăр Йашинă йулташ лайăх пулăшса пырать. Вăл кашни куллен бригадăсен ĕç итогĕсене шута илсе, курăнмала вырăна тухса çакать. Бригадă членĕсем ĕнер мĕнле ĕçлени çинчен тата ыран мĕн ĕçлемели çинчен пĕлсе тăраççĕ.

Ĕç кунĕ иртрĕ. Анчах Кузнецов йулташăн ĕç пĕтмен-ха. Вăл профсоюз комитечĕн ĕçĕсене тума тытăнать. Кашни куллен страховой комиççи йе рабочисен тĕрĕслÿ комиççийĕ тумали ĕçсене татса парать. Мĕншĕн тесен вăл профсоюз комитечĕн членĕ, тĕрĕслÿ комиççин председателĕ, страховой комиççин членĕ пулса ĕçлет.

Стахановла çирĕмкунлăх вăхăтĕнче Кузнецов йулташ йалан икшер нормă тултарса ĕçлеме хатĕрленет. Çав вăхăтрах вăл рабочисем хушшинче стахановла çирĕмкунлăха хатĕрленесси çинчен массăлă ăнлантару ĕçне туса пырать.

М. Т.

Плана тултарнă

Мартынкассинчи „Хĕрлĕ хĕвелтухăç“ колхоз (Трак р.) Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строительствинче ĕçлеме йатарласа бригадă организациленĕ. Бригадăра çуранисем 6 çын тата лашапа ĕçлекенсем 3 çын. Çак бригадă августăн 28-мĕшĕпе çентаберĕн 1-мĕшĕ хушшинче 85 кубла метр хăйăр турттарса, хăй çине илнĕ плана ытлашшипех тултарнă.

Бригадăра уйрăмăнах Матвейĕв, Матросăв тата Çергейăвă йулташсем лайăх ĕçленине палăртмала. Вĕсем кулленхи нормăна йалан иртерсе тултарчĕç.

Бригадă халĕ те строительствăра ĕçлет.

А. Иванов.

Колхоз правлени председателĕсем хăйсем чăрмантараççĕ

ПАТĔРЙЕЛ. Районри чылай колхозсем чукунçул строительствине активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр колхоз руководителĕсем вăл ĕçе хакламасăр тăраççĕ. „Первомайск“ колхозăн строительствăра ĕçлеме 4 çын йамала. Ку тăрана çитсе те пĕр çын та йаман. Бригадирсем строительствăра ĕçлеме çынсем йарасшăн, анчах колхоз правлени председателĕ ахаль те ĕç вăйĕ сахал тесе, чарса тăрать.

Çавнашкалах Тăрăнти Роза Люксембург йачĕпе тăракан колхозăн строительствăна 10 çын йамалла. Колхоз правлени председателĕ халĕ те çынсем йарасси çинчен шутламасть. „Искра“ колхозра та чукунçул строительствине ĕç вăйĕ организацилессине руководительсем чарса тăраççĕ.

Н. К.

Çулталăк планне тултарнă

ИШЛЕЙ. Йарабай йалсоветĕнчи Йулача колхозĕ кирпĕч производстви йĕнĕпе пысăк ÿсĕм турĕ. Кăçалхи çул унăн 130 пин кирпĕч туса кăлармала пулнă, вăл ăна 9 уйăх хушшинчех тултарчĕ.

Кирпĕч тăвас ĕçре уйрăмах Александр Федарăв йулташ паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленине палăртмала. Вăл 8 уйăх хушшинче 40 пин кирпĕч туса кăларнă тата 2 пин кирпĕч тикĕсленĕ. Вăл тунă кирпĕчсем пахалăх тĕлĕшпе те лайăх.

Н. Скворцов.

Районра малти вырăнта

Уйкас Йунтапа (Трак р.) йалсоветĕнчи Илйич йачĕпе тăракан колхоз йалхуçалăх ĕçĕсем йĕнĕпе районри ытти колхозсенчен малта пырать. Колхоз государствăна тыра тăратас тата машинă-тракторлă станцине натурплатă тыррине парас плана тултарнă.

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кăтартса панă срукра кĕрхи тырăсене лайăх пахалăхпа акса хăварнă. Çавнашкалах çуртрисене çапса пĕтернĕ, çентаберĕн 7-мĕш тĕлне кĕрхи тырăсене çапса пĕтерет.

Д. Гаврилăв.

Пысăк пахалăхпа акса хăварнă

Тăвай. Йĕнĕш Нăрвашри „Красная Чувашия“ колхоз тырпулсене уйран тăкаксăр пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕ. Тырпулсене пуçтарса кĕнĕ хыççăнах бригадăсем авăн çапма тытăнчĕç, 2, 10, 11, 12-мĕш бригадăсем ыраш, тулă çапса пĕтерчĕ.

Авăн çапас ĕçре Г. Макарăв. Николайĕвă, Н. Çеменăв, А. Степанăвă, А Терентйĕвă йулташсем стахановла ĕçлеççĕ. Ĕç нормисене 200 процент таран тултарса пыраççĕ.

„Красная Чувашия“ колхоз государствăна тыра тăратассипе районра мала тухрĕ. Кĕрхи тырăсене акса хăварнин пахалăхĕ те лайăх. 401 гектар çинче суртлă ыраш, 90 гектар çинче суртлă кĕрхи тулă акса хăварнă.

Государствăна тыра парса татнă хыççăн колхоз колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх 2-шер килограм тыра валеçсе пама тытăнчĕ.

А. Зайцĕв.

Й. Виктăрăв

Чехословаки хăрушлăх умĕнче

Чехословакипе Германи хушшинчи чикĕре, илемлĕ вырăнта, XIII-мĕш ĕмĕртех тунă кивĕ замăк тăрать. Вăл замăкра пин пÿлĕм, увăн хуçи—князь Гогенлойе. Кăçалхи августăн 18-мĕшĕнче çав замăка Британи правительствин официаллă мар уполномоченнăйĕ лорд Ренсимен пырса çитнĕ. Чаплă лорда Генлейн штурмовикĕсен хисеплĕ хуралĕ кĕтсе илнĕ. Лорд замăка пырса кĕнĕ, унта вăра тепĕр çур сехетрен Судет-нимĕç партин пуçлăхĕ, Гитлерăн Чехословакири агенчĕ, Конрад Генлейн пырса çитнĕ.

Ренсименпа генлейнăвĕцсем хушшинчи калаçу 5 сехете тăсăлнă. Кунта çакна паллă туса хăварма интереслĕ: шăпах çакăн умĕн, августăн 17 мĕшĕнче, Чехословаки министрĕсен пĕчĕк составĕ генлейнăвĕцсемпе пĕрле лару туса иртернĕ пулнă.

Çав ларура генлейнăвĕцсен представителĕ Кундт Чехословаки правительстви килĕшу тăвас шутпа кăларса тăратнă сĕнÿсенчен пĕрне те йышăнман, вăл çапла каланă: калаçусем пынă виçĕ уйăх хушшинче правительствăпа генлейнăвĕцсем ĕç çине мĕнле пăхнисем пĕр-пĕрин патне пĕрре те çывхарман, тенĕ. Малалла, „шалти ĕçсем йăвăрланса кайассипе“ йунаса хăратса, Кундт çапла каланă: Генлейн хăйĕн сăмахĕнче, генлейнăвĕцсен кăçалхи çуркунне Карлсбадра пулнă сĕвĕçенче каланă сăмахĕнче кăларса тăратнă требованисене çырлахтарсан кăна килĕшÿ пулма пултарать, тенĕ. Çав сăмахра Генлейн хăйне Чехословакири пĕтĕм нимĕçсене тытса тăмашкăн права пама ыйтнă, тулашри политикăна урăх çул çине пăрса йама, пуринчен малтан Францийепе тата Совет Союзĕпе пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договăрсене пăрахăçлама ыйтнă.

Правительствă генлейнăвĕцсене уступкăсем парать, ку ĕнтĕ çаксенчен курăнать: генлейнăвĕцсен требованисене правительствă „национальнăçсен кодексĕнче“ шута илнĕ; правительствă генлейнăвĕцсемпе калаçу иртернĕ чух вĕсен меморандумне тĕп вырăна хывма килĕшнĕ, чăннипе илсен вăл меморандум Чехословакине пайăн-пайăн вакласа уйрăма, Судет облаçĕнче фашисла диктатурă туса хума ыйтать.

Кунта, генлейнăвĕцсем килĕшми позици йышăннине кура, Ренсимен вĕсене хĕсме тивĕç пек, Чехословаки правительстви уступкăсем панине паллă тумалах пек туйăнать. Анчах Ренсимен Генлейнпа калаçнă хыççăн, лорд каллех Чехословаки правительствине кайала чакма канашсем парать, генлейнăвĕцсем вăл калаçусем иртерме çĕнĕ никĕссем шыраса тупма сĕнет. Вăл хĕснипе Чехословаки правительстви поштă ведомствинчи чылай пысăк 7 вырăна генлейнăвĕцсен кандидачĕсене лартать тата çывăх вăхăтра икĕ генлейнăвĕца округсен правительсем туса лартма палăртать.

Лорд Ренсимен ăçтала май ĕçлесе пынине пĕр çак та лайăх кăтартса парать ĕнтĕ. Тата çакна хушса калани вырăнлă пулĕ: Ренсимен Генлейнпа Гогенлойе замăкĕнче тĕл пулни пĕрре те ăнсăртран пулман. Гогенлойе княгинйăн, темиçе çул ĕлĕкрех Францирен кăларса йанăскерĕн, йалан пурăнакан вырăнĕ—Лондăн, вăл—Гитлер адйутанчĕн, капитан Видеманăн çывах тусĕ. Кăçалхи ийуль уйăхĕнче Англин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ лорд Галифакс хăй Парижа кайас умĕн капитан Видеманта тĕл пулнă. Çак тĕлпулава ĕнтĕ çав княгинйă урлă тунă. Шăпах лорд Галифакспа Видемант тĕл пулнă хыççăн ĕнтĕ, ийулĕн 20 мĕшĕнче Парижра, Галифакс Даладйепе тата Боннепе канашлавă вăхăтра, Ренсимена Прагăна йамала тунă.

Йулашки телеграммăсем: лорд Ренсимен Чехословаки ыйтуне татса пама хăйĕн проектне туса та хатĕрленĕ ĕнтĕ, тесе пĕлтереççĕ. Вăл проектра Чехословакирен Швейцари йевĕрлĕ кантоналлă государствă туса хума палăртса хунă. Урăхла каласан, кунта Лондăнăн „нейтрализаци“ çинчен калакан кивĕ пройекчĕ курăнсах тăрать. Вăл проект пирки Францири паллă журналист Пертинакс: Чехословакине нейтрализацилени вăл унăн никама пăхăнас марлăхне пĕтерсе лартнипе пĕрех пулать, тесе çырнă.

Ĕçе лайăххах чухлайман вулакан çапла ыйтма пултарĕччĕ: Англи дипломатийĕ Чехословаки çине çавтери пысăк интереспе пăхнине мĕнпе ăнлантарса памала тата Чемберлен центрти Йевропăра Англин пурнăçшăн кирлĕ интерессем çук, тенине çав интереспе мĕнле çыхăнтармала? Çак сăмахсене Чемберлен хăй умне: Англи Чехословакин никама пăхăнас марлăхне сыхлĕ-и, текен ыйту лартсан калавă. Куна ăнлантарса пама пит те çăмăл. Британи империалисăмĕ Германи фашисăмĕпе хаклашать, çак ĕçре вăл Чехословакине вак укçа вырăнне шутлать. Паллах, Чехословаки халăхĕн никама пăхăнас марлăхĕпе ирĕклĕхĕ пĕтессипе пĕтмесси çинчен тăракан ыйту Лондăнри реакционерсене пуринчен те сахалрах шухăшлаттарать.

Лорд Ренсименăн миççийĕ,—увăн тĕллевĕ Чехословакине Германи фашисăмĕ умĕнче пуç тайтарасси пулса тăрать,—агрессăрпа килĕшÿ тума шутлакансен политикине палăртса панисенчен пĕри. „Чемберлен хăйĕн опытне мала лях туса пырать“, — тесе çырать „Э, от нувель“ хаçат. Ăна Римпа килĕшÿ тума май килмерĕ, халь вăл „Рим—Берлин тĕнĕлĕ“ патне Германи йенчен çывхарма хăтланать.

Анчах вăл хăтланусем те ăнăçсăр пулса пынине курас мар тесен, суккăр пулас пулать. Британи премйерĕ, уступкăсен политикипе агрессăра çăварлăхлама пулать, ăна килĕшÿлĕрех позици йышăнтарма пулать, унăн йут çĕршывсене турта илес кăмăлне пĕчĕклетме пулать, тесе ĕнентерсе каланисенчен пурнăçри фактсем хайарран мăшкăласа кулчĕç.

Чăнах та, май уйăхĕнче пулса иртнĕ событисенчен, Германи фашисăмĕ Чехословаки çине тапăнма шутласа, Чехословаки чикки патне хăйĕн çарĕсене куçарса пынă вăхăтран пире 3 уйăх çеç уйăрса тăрать. Акă каллех Чехословакине Германи тапăнса кĕрес хăрушлăх тухса тăчĕ. Августăн 15 мĕшĕнче Германире калама çук пысăк çар маневрĕсем пуçланнă, вăл маневрсем, паллах, ăнсăртран мар Чехословакипе йунашар районсенче сарăлса пыраççĕ. Германи фашисăмĕ хăйĕн требованийĕсене халь те пăрахмасть-ха, вăл требованисен шухăшне унăн агентури—генлейнăвĕцсем пит те уççăн каласа парĕç.

Виçĕ уйăх кайарах вăйлăн çĕкленнĕ мир фрончĕ умĕнче Германи фашисăмĕ кайала чакрĕ. Чехословаки правительстви ун чух çирĕп позици йышăннăччĕ. Чехословаки халăхĕ хăй ирĕкĕшĕн кĕрешме хатĕр тăнине, вăл фашисла пусмăр айне кĕрсе ÿкесшĕн маррине кăтартса пачĕ. Ун чухне Франци: епĕ пĕрне-пĕри пулăшасси çинчен тунă договăр тăрăх хам обязательствăсене пурнăçа кĕртĕп, терĕ. Çавнах каларĕ Совет Союзĕ те. Ун чухне Англи те, Германи агрессăрне пĕрмайах пулăшса тăракан Англи те—ирĕксĕрех Гитлерăн хулленрех хăтланма сĕннĕччĕ, Францийепе Германи хушшинче хирĕçÿ тухас-мĕн пулсан хăй вăл Франци йенче пуласси çинчен астутарса хунăччĕ.

Гитлер чакрĕ, анчах çĕнĕрен сикме хатĕрленес тесе кăна. Çак хушăри вăхăтпа вăл лăрма-тăма пĕлмесĕр вăрçа хатĕрленес ĕçре, Чехословакинче ишĕлтерÿлĕ ĕçсем тăвас ĕçре, Чехословакине тăрăпĕччен тăратса хăварас тĕлĕшпе дипломатилĕ активлăха вăйлăн сарса йарас ĕçре усă курчĕ. Фашисла дипломатин задачи çакăнта пулнă: вăл май уйăхĕнчи пек ан пултăр, агрессăр тапăннă çĕршыва коллективлăн сыхлас условисем ан пулччăр, тесе ĕçленĕ.

Англипе Франци Чехословаки правительствине хĕсни, унтан генлейнăвĕцсене уступкăсем пама ыйтни, Британи дипломатин активлăхĕ, Ренсимен миççийĕ—çаксем вĕсем пурте Британи правительстви Германи фашисăмне увăн задачисене пурнăçа кĕртес çĕрте мĕн пур вăйпа пулăшинче калама çук уççăн кăтартса пани пулать те.

Чехословаки правительствине хыттăн хĕсни Чехословакин шалти лару-тăрăвĕнче те палăрчĕ. Правительствă коалицинчи сылтăм çунат—аграриссен партийĕпе „народни с"едноцени“ текен, урăхла каласан, шултăра капиталпа помещиксен партийĕ правительствăна хыттăн хĕсеççĕ, вĕсем унтан Гитлерпа килĕшме ыйтаççĕ. Анчах çак партисем вĕсем Чехословаки халăхĕн ирĕк-кăмăлне кăтартса памаççĕ. Халăхăн ытларахĕш пайĕ правительствăра хутшăнса ĕçлекен демократилĕ партисене пулăшать. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх тăвăллăн пулса пыракан демонстрацисен хумĕ Чехословаки халăхĕ хăйĕн ирĕкĕшĕн тата хăйĕн никама пăхăнмаллăхĕшĕн фашисла захватчиксене хирĕç тăрса кĕрешме малтанхи пекех хатĕр тăнине уççăн кăтартса пачĕ.

Çак кунсенче кăна Прагăра чукунçул çинче ĕçлекенсен 75 пин çынлă демонстрацийĕ пулса иртнĕ. Прагă хулине çĕршывăн пур кĕтесĕсенчен те демонстрантсен отрйачĕсем пуçтарăннă. Шестви виçĕ сехете ытла пынă. Демонстрантсем „Епĕр парăнмастпăрах“, „Майăн 21-мĕшĕнчи пекех çапăçатпăр“, тесе çырнă плакатсем тытса пынă. Массăлă митингсем Кăнтăр Чехинче, Хĕвеланăç Чехинче, Çурçĕр-Хĕвелтухăç Чехинче те пулса иртнĕ. Генлейнăвĕцсем пÿтсĕрленни халăхсен чи сарлака сийĕсене калама çук хыттăн тарăхтарать. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх пулса иртнĕ митингсенче йышăннă резолюцисенче правительствăран генлейнăвĕцсене хирĕç татăклă мерăсем йышăнма ыйтса çырнă. Çакăн пек требованийе Хĕвеланăç Чехин 17 муниципалитетсен премйерĕ умне тăратнă.

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Генлейнăвĕçсем переворот тума хатĕрленеççĕ

Чехословакири компартин оргăнĕнче—„Роте Фане" хаçатра судет-нимĕç парти руководствин пропагандă пайĕн пуçлăхĕн вырăнти организацисем патне йанă вăртăн циркулярне пичетлесе кăларнă. Унта çĕнтабĕрĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр кашни пунктра миçе коммунист пурри çинчен, компарти тата хĕрлĕ профсоюзсен йертсе пыракан работниксен адрĕсĕсене кăтартса тĕрĕс сведĕни тăратма хушнă. Генлейнăвĕçсен партин пропагандă пайĕ Судет облăçĕнчи фашисăма хирĕç кĕрешекен парти таврашĕнчи мĕн пур çынсен „хура спискисене" пухать. Фашисăма хирĕç кĕрешекен партине генлейнăвĕçсем переворот тума пуçлас вăхăтра, Германи çарĕсем Чехословакине тапăнса кĕме пуçланă вăхăтра вĕлерсе пĕтерме шутлаççĕ.

Тĕрлĕ вырăнсенчен генлейнăвĕçсем час-часах террор туни çинчен калакан хыпарсем килеççĕ.

Карлавă Варă хула сывăхĕнчи районра рабочисен кооперативĕн çуртне генлейнăвĕçсен штурмовикĕсем çĕмĕрсе тăкни уйрăмăнах тарăхтарнă.

Магазин витринисене çĕмĕрсе тăкнă, унти таварсене урама кăларса ывăтнă. Икĕ рабочине магазина илсе кĕрсе хытă хĕненĕ.

(ТАСС).

Вут-кăварпа кĕрешес ĕç

Йулашки вăхăтра Шăхасан, Кувакинă, Тутаркас тата ытти районсенче вут тухнипе пурлăха сийен тунисем пулнă.

Ку ĕнтĕ республикăри уйрăм организацисенче, парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсенчи работниксем пушарпа кĕрешес ĕçе хакламаннинчен, ку ĕç çине тимсĕрле пăхнинчен килет. Парти райкомĕсем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн бÿровĕ çак çулхи иййунĕн 16-мĕшĕнче вут-кăвара хирĕç кĕрешессине вăйлатасси çинчен йышăннă постановленине çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ. Çавăн пекех Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ иййунĕн 7-мĕшĕнче вут-кăвара хирĕç кĕрешесси çинчен йатарласа постановлени йышăннăччĕ. Вырăнсенчи совет организацийĕсем çак постановленине çителĕклĕ таран пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Ĕç малашне те кун пек пыма пултараймасть. Парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсенчи парти группиĕсенче çак кунсенчех районра вут-кăвара хирĕç кĕрешес ĕç мĕнле тăни çинчен сÿтсе-йавма кирлĕ. Ирĕклĕ пушар дружинисен ĕçе çирĕп йĕркене кĕртмеле. Итем çинче, çуртсемпе складсем патĕнче шывсем пулмала, пушар инвентарĕсене йаланах йусавлă тытмала.

Нумай колхозсенче итемсем çинче пĕр çменăпа хурал тăраççĕ. Малала кун пек йĕрке пулма кирлĕ мар. Пур колхозсенче те итемсемпе тырă склачĕсем патĕнче 2—3 çменăпа хурал тăрассине йĕркелемеле.

Пушара хирĕç кĕрешессине тĕпренех вăйлатмала.

Хурал тăрассине йĕркелемен

ТРАК. Йулашки çулсенче районри чылай колхозсем пушарпа кĕрешме çĕнĕ инвентарсем туйанчĕç. Исакăвă йалсоветĕнчи „Хĕрлĕ сухаç" колхозра та кăçал çĕнĕ насус илсе килчĕç. Анчах та насус ручкине çĕмĕрсе те пăрахнă.

Чылай колхозсенче пушарпа кĕрешмели хатĕрсене лайăх сыхласа тăмаççĕ. Шурçырма йалсоветĕнчи „Майăн 1-мĕшĕ" колхозра вут-кăвара хирĕç кĕрешме уйăрнă пичке çуркуннеренпех уйра ларать. „Хĕрлĕ сухаç" колхозăн шыв пичкилартакан урапине уйранах вăрласа кайнă.

Итем çинчи тата складсенчи тырăсене сыхă хурал тăни çук. „Исакăвă" колхозăн итемĕ çинчи хуралçăсем каçхине килĕсене кайса çывăраççĕ. Кăнтăрла итем çинче никама та курма çук. Йалсенче те йĕркелĕ хурал тăмаççĕ. Çирĕклĕре 6—7 çулхи ачасене хурал тăратаççĕ.

В. Михайлăв.

Трахомпа кĕрешеççĕ

Халăх сывлăхĕшĕн кĕрешес ĕçри пысăк задачăсенчен пĕри—ĕлĕкхи саманаран йулнă инкеке—трахома пĕтересси. Çак тĕлĕшпе Елĕк районĕнчи трахработниксем уйрăмах йулашки уйăхсенче тимлĕн ĕçleme тытăнчĕç. Нумай йалсоветсенче кăçал трахома тĕпиппех пĕтерсе çитереççĕ. Трахомпа чирлисем Асакассинче (трахработник Е. Алекшин) 4 çын, Мăн Пакăшра (трахработник Мидуркин) 1 çын çеç йулнă. Вĕсене трахработниксем çак кунсенчех сыватса çитереççĕ. Трахомпа кĕрешес ĕç ытти йалсенче те вирлĕ пырать.

Район пĕтĕм ĕççыннисене трахома хирĕç, тасалăхпа культурăшăн кĕрешес ĕçе мобилизацилене. Çак майпа ĕçлесе район йулашки уйăхсенче пысăк çитĕнÿсем турĕ. Трахомран 2523 çынна сыватнă.

М. Йакăвлĕв.

Тăрăшса ĕçлет

Шупашкар районĕнчи сывлăх пайĕ Шурчакассинче йатарласа трахпункт уçрĕ, унта ĕçleme трахработницă А. Оçипăвăна йачĕ. Оçипăвă йулташ тăрăшса ĕçлет, çулталăк хушшинче нумай çынна трахомран тасатрĕ.

А. Моиçейĕв.

Чехословаки хăрушлăх умĕнче

(Й У Л А Ш К И)

Франципе Англи пичечĕ Чехословаки проблеми вăл—Англипе Германин тата Франципе Германин пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăнăвĕсен проблеми пулать,—тесе çыраççĕ. Ку вăл тĕрĕс, анчах çакă вăл çав вăхăтрах, чи малтан Чехословаки халăхĕн проблеми пулса тăрать. Унăн ирĕк-кăмăлне Чехословакири фашисла агрессăрпа калаçса татăлма тăрăшакансем те тата йут çĕршывсенчен чĕнмесĕр килнĕ „советниксен" те, Чехословакине Германи фашисăмĕ умĕнче кайала чактарма тăрăшакансене, шута илес пулать.

Чехословаки халăхĕ хăйĕн ирĕкĕпе хăйĕн никама пăхăнмаллăхне хÿтлевипе вăл мир ĕçне хÿтлет. Çакна вăл пĕлет, мĕншĕн тесен Чехословаки хăй тĕллĕн государствă пулса тăрассине хăратни—вăл Йевропăри мире хăратнийех пулать.

Лондăнрипе Парижри фашисăм йевĕрлĕ хаçатсем, Англипе Францири реакцилĕ çынсен шухăштуйăмĕсене кăтартса çыракансем, фашисла агрессăрпа калаçса татăлас çул çинче „мире çăласси" çинчен темĕн чухлĕ те пăврама пултараççĕ. Анчах фактсене нимĕнла те пытарма çук. Фактсем—Германи фашисăмĕ Франци Чехословакине пулăшма пыра ссине чăрмантарас шутпа хальхи вăхăтра Рейн йуханшыв тăрăхне çирĕплетни çинчен калаççĕ. Фактсем—Чехословакине тытса илни тĕнчери империалисăм вăрçи хыççăн Германи тапăнасран Франци хăйĕн валли туса хунă хăрушсăрлăх çиçтемине пĕтерсе лартасси çинчен калаççĕ. Фактсем—Чехословакине тытса илес-мĕн пулсан Германи валли хĕвелтухăçнеле çул уçăлни çинчен калаççĕ. Çапла вара Франци çине те тапăнма çул уçăлни çинчен, Франци çине тапăнас хăрушлăх вăл çав вăхăтрах Англи çине тапăнас хăрушлăхах пулса тăрать.

Англипе Франци реакцийĕ, хăйĕн класлă интересĕсемшĕн тăрăшса, Англипе Францин нацилĕ интересĕсене хĕссе лартма та хатĕр, вăл реакци Германи фашисăмне Йевропăри жандарм, рабочисен йухăмне хирĕç кĕрешмели тĕрек вырăнне хурса хаклать, вăл реакци „тоталитарлă" государствăсем арканса кайасран хăрать.

Пертинакс Францири „Эроп нувель" йатлă журналта çапла асăрхаттарса çырать: Германи фашисăмĕ тĕлĕшпе Англипе Франци çирĕп те татăклă позици йышăнсан кăна Йевропăра мир пулма пултарать.

Черчилль тата çапла кăшкăрашать: Германи фашисăмĕ маневрсем тунă пек туса хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене вăрçма хатĕр туса тăратать, çакăн пек чухне Англипе Франци темшĕн контрмерăсем йышăнмаççĕ. „Контрмерăсем йышăнассинчен пăрăнни—тесе çырать Черчилль,—усал ĕмĕтсене кăна хавхалантарать. Чехословакине тытса илни... йулашкинчен, агрессăрсем йеинчен вăрçă пуçласа йани патне илсе пынă пулĕччĕ, çав вăрçăна вара... пысăк çĕршывсене пурне те хутшăнтарнă пулĕччĕ".

Капиталисăмлă Йевропăри атмосферă калама çук вĕриленсе çитнĕ. Буржуази пичечĕ Германи маневрисем мĕне пĕлтереççĕ: шантаж тунине йе Чехословаки çине Германи вăрçăпа тапăнса кĕрсе кайассине пĕлтереççĕ-и, тесе йумăç пăхать. Паллах, çаксенчен иккĕшĕ те курăнсах тăраççĕ. Паллах, Йевропăри лару-тăру вичçĕ уйăх кайăрахринчен тата ытларах çивĕчленсе кайрĕ, тата ытларах електричĕствăпа тулăнчĕ.

Çакнашкал ĕнтĕ агрессăрпа килĕшÿ тăвас политикăн, коллективлă хăрушсăрлăхран пăрăнас политикăн чăн-чăн çимĕçĕсем.

Совет писатĕлĕсем мĕнле çĕнĕ произведенисем çыраççĕ

„Пĕрремĕш рангри капитан" йатлă роман тата „Цусима" опĕрă

Хальхи вăхăтра епĕ икĕ йапала çинче ĕçлетĕп: „Пĕрремĕш рангри капитан" йатлă роман тата „Цузима" йатлă опĕрă валли либретто çыратăп.

„Пĕрремĕш рангри капитан" роман 2 пайлă пулать. Пĕрремĕш пайĕнче патша вăхăтĕнчи флот пурнăçĕ, иккĕмĕшĕнче—хамăрăн Хĕрлĕ флот пурнăçĕ сăнланса курăнать. Епĕ йурийех çапла тăватăп, вулакан ĕлĕкхипе хальхи пурнăçа танлаштарса пăхма пултартăр тесе шутлатăп. Романăн тĕп геройĕ Захар Псалтырĕв пулать. Захар—халăх хушшинче ÿссе çитĕннĕ çав тери пултарулă çын. Патша режимĕ вăхăтĕнче вăл карап командирĕ (пĕрремĕш рангри капитан) патĕнче вестовой çеç пулса ĕçленĕ. Çапах та вăл, вестовой çеç пулнă пулин те, карап çинче, командир урлă, пур йенчен те пултарулăн ĕçлесе пынă, вăл ĕçлесе пурăннă карап флотра чи лайăх карап вырăнĕнче шутланнă. Халĕ вара, граждăн вăрçи урлă тухса, тинĕс çар училищинче тата тинĕс çар Академийĕнче вĕренсе тухнă хыççăн, Псалтырĕв хăй пĕрремĕш рангри капитан йатне илсе, советăн чи лайăх линкорĕн командирĕ пулса тăрать.

Романăн тĕп идейи—кăмăлăн тасалăхĕ, тăванлăх тата çĕршыва пĕр вĕçĕмрен йуратни. Захар Псалтырĕвпа пĕрлех романра урăх образсем те, иртнĕ вăхăтпа хальхи вăхăта сыхăнтаракан характĕрлă образсем пулаççĕ. Сăмахран, Кудинăв боцмăнăн образĕ. Вăл çын—вăтă тинĕççĕ, чăрсăрланса кĕрешме тата ĕçме йуратакан скер, вăл çын вĕри чĕрелĕ, революцилĕ, кивĕ йĕркене вăл чĕререн кураймасть, унăн çак курайманлăхĕ революцин малтанхи кунĕсенчех палăрса сисĕнет. Халĕ Кудинăв çĕнĕ флотра, совет флотĕнче ĕçлет.

Романра советăн çамрăк морйакĕсем те пулаççĕ: Псалтырĕвăн ывăлĕ — крейсĕр командирĕ, çĕнĕ командирсем, специалиссем тата краснофлотĕçсем.

Романăн малтанхи пайĕнче курăнакан пĕрремĕш рангри капитан Куликовăн (вăлах Псалтырĕв) политикăлă тата культурлă ÿсĕмĕ ăна политикла çирĕплĕх, большевикла хĕрÿлĕх, çамрăксене воспитани парас ĕçри хăйулăх туйантарма пултарнине вулакан романăн иккĕмĕш пайĕнче курать. Пурнăçран пĕр утăм кайа йулмасăр, унпа пĕрлех пырса, Куликов партипе тăван çĕршыва хăй пекех вĕçĕмрен йуратса парăннă çамрăк патриотсене воспитани парас ĕçре ырми-канмисĕр ĕçлет.

Романăн пĕрремĕш пайĕ çырăнса пĕтнĕ ĕнтĕ. Халĕ иккĕмĕш пайĕ çинче ĕçлетеп, ăна çак çулта пĕтерме шутлатăп.

„Цусима" опĕрă валли либреттă çак çитес кунсенчех хатĕр пулать. Ку ĕçе соавтăрсене: Çергей Торогецкий поетпа киноработник В. В. Воронецкий йулташсене те чĕнсе хутшăнтарнă. Либреттăна сăвăпа çырнă. Ун çинче нумай ĕçлемеле пулчĕ: хĕрарăмсен ролĕсенчи йăвăр интригăсене кĕртсе вĕсемпе Цусимăри çапăçăвăн хăватне чакармасăр тата Йапонĕçсем вырăссене çĕнтернин тĕп сăлтавĕсене уçса, йапонĕçсем вырăс халăхне мар—унăн хавшалса çĕрме пуçланă правитĕлствине çĕнтернĕ иккенне кăтартса памала пулчĕ. Çаксем пурте сахал сăмахсемпех сăрланса курăнмала.

А. НОВИКĂВ-ПРИБОЙ

Совет хĕрарăмĕпе унăн йуратăвĕ çинчен пйесă

Хальхи вăхăтра еп Мускаври Горький йачĕпе тăракан Художĕствăлă театр валли пйесă çыратăп. Темă—Совет хĕрарăмĕ тата унăн йуратăвĕ. Пйесăра икĕ совет хĕрарăмĕ тĕп вырăн йышăнаççĕ. Пйесăра вĕсем хăйсем йуратнă çынни çине мĕнле пăхни, ун йеннеле мĕнле туртăнни курăнать. Вĕсен туртăмлăхĕсем, катастрофă хыççăн йуратнă çын пурнăçĕ йăвăр минут тĕлне çитсессĕн, вăйлă испытани тата тĕрĕслев витĕр тухаççĕ. Иккĕшĕн те тĕп вăйĕсем, кăмăлăн активлăхĕпе тарăнлăхĕсем нихăçанхинчен вăйлărах çак катастрофă умĕнче уçăмлăн палăраççĕ. Пйесăра çавăн пекех совет çамрăклăхĕн чăн-чăн тăванлăхĕпе чăн-чăн сисĕмлĕхне кăтартса парас ыйту та тăрать.

Пйесăри ĕç колхозра, колхозри çĕнĕ интеллигенци хушшинче пулса иртет.

Ку ĕçе çитес кĕркунне вĕçлеме шутлатăп.

Çавăнпа пĕрлех железнодорожниксен пурнăçĕсенчен илсе çĕршыв оборонине кăтартса парас шутпа çырма палăртнă пйесă валли материалсем пухатăп.

Кино-сценарисем туса памали хупă конкурса та хутшăнтăм. Сценарин теми—хальхи пурнăçпа йăла.

„Ача" йатлă автобиографилĕ повĕç çырас ĕçе малала тăсатăп. Повĕçре хресченĕн ăраскалĕ, унăн кĕрешĕвĕ (сутçанталăк вăйĕсемпе кĕрешни) сăрланса курăнать. Ку картинăри ĕç Александр III патша вăхăтĕнче пулса иртет.

К. ТРЕНЁВ.

Осоавиахим пуçламĕш организаци мĕнле ĕçлет

Чăваш АССР Осоавиахим Тĕп Совечĕ çумĕнчи Осоавиахим пуçламĕш организацинче 35 член шутланать. Лайăх стрелоксем хатĕрлес тĕлĕшпе кунта çине тăрса ĕçленĕ. Пăшал перес ĕçри отличник снайпĕрсене вĕрентсе хатĕрленĕ. Г. В. Ваçилйĕв, В. Михайлăв тата ыттисем те снайпĕр пулчĕç. Г. Ваçилйĕв йулташ ССР Сойузĕнчи халăхсен стрелковăй спартакиадинче пулма тивĕçлĕ пулчĕ.

1937—38 çулсенче производствăра ĕçлессинчен уйрăлмасăр пилот ĕçне пĕр çын вĕренсе тухрĕ. Халĕ каллех 2 çын вĕренеççĕ.

Осоавиахим членĕсенчен „Ворошиловский стрелок" значокне (1-мĕш ступень) 13 çын, 2-мĕш ступень 6 çын, ПВХО" значокĕ пĕрремĕш ступень 14 çын, иккĕмĕш ступень 5 çын илчĕç, 35 члентан 27 членăн хăйсен противогазсем пур.

Осоавиахим членĕсем хушшинче политикăлă-воспитанилĕ ĕçе туса пыма парти комитечĕ ПСК(б)П членне Агейĕв йулташа политрука, комсомолеç Д. Ваçилйĕв йулташа политрук заместителне уйăрчĕ. Паллăрах ыйтусем тăрăх тата партипе правитĕлствă решенисене ăнлантарса пама кашни кунах политинформаци ирттеретпĕр.

Осоавиахимăн 12-ш лотерей билетне 1240 тенкĕ сарнă. Вăтамăн илсен кашни член 27 тенкĕлĕх илнĕ.

Организацире Осоавиахим членĕсен билечĕсене улăштарса çитернĕ. Билетсене улăштарнă вăхăтра хамăр ĕçе татах та вăйлатрăмăр. 13 член противогазсем туйанчĕç. Оборонă ĕçне вĕренмели кружоксем лайăххрах ĕçleme пуçларĕç. Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле организацири пур членсене те оборонă значокĕ илтерессишĕн тăрăшатпăр. Халĕ Й. И. Шеронăв, В. В. Федотăвă йулташсем „Ворошиловский стрелок" значокĕн нормисене пачĕç. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн уставне вĕренме кружок уçнă, парти комитечĕ кружока йертсе пыма руководитĕлсене уйăрса пачĕ.

Анчах та хăшпĕрисем Осоавиахим ĕçне лайăхлатас пирки пуш халап çапма çеç йуратаççĕ. Хăйсем çак ĕçе тивĕçлипе хутшăнмаççĕ. Т. Рйабчикăв, С. И. Киселев, Агейĕв оборонă ĕçне вĕренмели кружоксен заняттийĕсене çÿремеççĕ.

Л. М. Каганович йачĕпе тăракан литейно — механический савăтри оборонă ĕçĕнчи активиссем чĕнсе каланине сÿтсе-йаврăмăр. Кун хыççăн ĕçе тĕпренех лайăхлатма, Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине пысăк ÿсĕм туса кĕтсе илме пултăмăр.

С. Д—в.

Культурăлă-массăлă ĕç çук

Канашри типографийĕнче сахалах мар рабочисем ĕçлеççĕ. Апла пулин те вĕсем хушшинче нимĕнле культурăлă-массăлă ĕç те çук. Кăнтăрлахи канура рабочисем хаçатжурналсем вуласшăн. Анчах типографине мĕн пурĕ те пĕр екземплйар кăна хаçат пырса тăрать. Шашкă-шахмăт тата ытти вăйă хатĕрĕсем çинчен калаçмали те çук „Çметăпа унашкал йапаласене илме пăхман" тет типографи директăрĕ Бык йулташ.

Типографи çумĕнче стена хаçачĕ кăларассине йĕркеленĕччĕ. Ăна та пулин праçникрен праçнике çеç кăлараççĕ. Рабочисем хушшинче культурăлă-массăлă ĕçе йĕркелессипе профорг Астафйĕв йулташ та ĕçлемест. Малашне рабочисен кану вăхăтне культурăлă ирттерессине организацилемелех.

Ф. Антонăв.

Колхоза кĕреççĕ

ЙĔПРЕÇ. Асанкасси йалсоветĕнче йулашки вăхăтра политикăлă-массăлă ĕç чылай аванланчĕ. Ыалти активиссем йединоличниксем хушшинче партипе правитĕлствă кăларнă постановленисене, ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса панă хыççăн, çак кунсенче виçĕ хуçалăх колхоза кĕчĕç.

В. В.

Редакцине килнĕ çырусем

Ĕçукçи тĕрĕс памаççĕ

Трахработниксене ĕçукçи мĕнле йĕркепе тÿлесси çинчен 1937 çулти декабĕрĕн 10-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йатарласа постановлени кăларчĕ. Постановлени тăрăх трахработникре 5 çул ĕçленисене 105 тенкĕ, 10 çул ĕçленисене 115 тенкĕ, 10 çултан малалисене 130 тенкĕ тÿлемеле. Анчах Йĕпреç районĕнчи чылай йалсоветсем трахработниксене ĕçукçи постановленире кăтартнă пек мар, ĕçленĕ çулсене пăхмасăр параççĕ. Анат Клешкассинчи трахпунктри трахработник 6—7 çул ĕçлет. Апла пулсан унăн саккун тăрăх уйăхри ĕçукçи 115 тенкĕ пулмала, Иалсовечĕ ăна 100 тенкĕ çеç тÿлет.

Павлăв.

Пире пулăшмаççĕ

(Трактăрис-бригадир çырăвĕ)

Тракри машинă-трактăрлă станцин Исакăвă участкинчи трактăр бригадинче ĕçсем питĕ йапăх пыраççĕ. Кашни 2—3 гектара сухаласанах трактăрсене йусама тивет. Трактăриссем аптранипе ĕçрен пăрахса кайаççĕ. Колхоз председателĕсемпе колхозниксем: „есĕр ĕçлеместĕр, пире кайа хăварса пыратăр" теççĕ.

Трактăрсен карбÿратăрсем ĕçлемеççĕ, çакна пула çунтармали йапаласене ытлашши расхутлама тивет.

Пирĕн трактăриссем те çамрăк. Епĕ хам та бригадирта ĕçleme тытăнни нумай пулмасть. Анчах МТС-ри аслă механик Анисăв йулташ, МТС директăрĕ Тимофейĕв йулташ пирĕн участкăри трактăриссем ĕçлемесĕр ларнине пĕлеççĕ, анчах ĕçе йĕркелеме пулăшмаççĕ.

Ф. Çтепанăв.

Плана срукчен тултаракансем

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнче халĕ икшер нормă тултарса ĕçлесси нумай рабочисен кулленхи ĕç йалинче çирĕпленнĕ. Çĕлекен цехри стаханăвкă Скачковă йулташ хăйĕн нормине йалан 200-шер процент тултарса ĕçленипе çулталăкри плана 7 уйăх хушшинче 106 процент тултарнă.

Çулталăк планне срукчен тултаракансем кунта вуншарăн шутланаççĕ. С. Кудрйавцĕв йулташ 101 процент, А. Орловă йулташ 103 процент, Н. Павлăв йулташ 109 процент, Калентйĕв йулташ 105 процент тултарнă.

Стаханăвла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнă тĕле икшер нормă тултаракансен хисеçĕ тата та ÿсрĕ. Вĕсен ретне: Харитонăв, Каракулăвă, Казаков т. ыт. йулташсем те тăчĕç. Вĕсем пурте нормăна 230 процентран кайа мар тултараççĕ.

Федăрăв.

Екскурçине кайрĕ

Н. Чуксин йулташ Шупашкарти „Красный кустарь" ертелте 1933 çултанпа ĕçлет. Çак çулсем хушшинче вăл техникăла, политикăла пĕлÿ йенĕпе чылай ÿсрĕ. Халĕ Чуксин йулташ сборочнăй цехра стольăр пулса ĕçлет, чи лайăх стаханăвĕç. Ĕç нормине йаланах 140 процентран кайа мар тултарать.

Ертел правленийĕ Чуксин йулташа пĕрре кăна мар премиленĕ. Август уйăхĕн йулашки кунĕсенче Чуксин йулташа Мичуринск хулине екскурçине каймали путевкăпа премиленĕ.

Т. Мирский.

Йединоличниксемпе ĕçлемеççĕ

Кăмаш йалсоветĕнче (Вăрнар районĕ) „11 лет Чувашии" тата „Комсомолец" колхоз членĕсенчен чылайĕшĕ 1938 çулхи йалхуçалăх налог укçине тÿлесе татрĕç. Колхозниксем хушшинче страховкăпа займ укçисене пухас йенĕпе те лайăх ĕçлеççĕ.

Йединоличниксем хушшинче укçа-тенкĕ пухас ĕç йăлтах урăхла тăрать. Налог агенчĕ Йермолай Большаков йулташ вĕсенчен налог укçи пухас йенĕпе нимĕн те тумасть. 3-мĕш кварталшăн йединоличниксенчен пĕр пус укçа та пухман.

П. Кудрйавцĕв.

С У Д

Алимент тÿлеменшĕн

1932 çулхи августăн 1-мĕшĕнче Чистайри (Тутар АССР) халăх сучĕ Николай Сергейевич Новикăвран хăйĕн малтанхи арăмĕпе пулнă ачине пăхса ÿстерме ĕçукçинчен 30 процентне Йелизаветă Новикăвăна тÿлесе тăмала туса панă. 1937 çулхи август уйăхĕнчен пуçланса Новикăв, алимент тÿлесрен хăтăлас майпа, вырăнтан вырăна, ĕçрен ĕçе куçса çÿренĕ. Хăй адрĕсне Новикăвăна пĕлтермесĕр пурăннă.

Йелизаветă Новикăвă кун çинчен Чистайри милици управленине пĕлтернĕ. Милици управленийĕ Новикăва шыраса тупса ĕçе суда панă.

Çак ĕçе Шупашкар хулинчи халăх сучĕ пăхса тухса, Новикăва Уголовнăй Кодексăн 158-мĕш статйи тăрăх айăпласа пĕр çул та 6 уйăх хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

В. Петров.

Пулни-иртнисем

ПУШАР. Çак кунсенче Вăрманкасри (Елĕк р.) „Çутă çул" колхозăн итемĕ çинче вут тухса 7 капан утă, 17 капан улăм, 24 капан сĕлĕ, 10 капан тулă çунса кайнă. Пушар—пĕчĕк ачасем капансем хушшинче шăрпăк тивретсе выляннинчен тухнă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Росснабсбытăн Чăваш республикĕнчи кантурне

ЕКОНОМИСТ-ФИНАНСИСТ ТАТА БУХГАЛТĔР-СТАТИСТИК

васкавлă кирлĕ

2—1

Шупашкарти вендиспансерăн çĕрлехи профилакторийĕ (Поликлиникă килкартинче) КАШНИ КАÇАХ 12 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен ĕçлет

4—1

Шупашкар хула совечĕн Вут-шанкă хатĕрлекен кантурне

аслă бухгалтĕр заместителĕ, бухгалтĕр помощникĕ, çекретар-машинисткă

К И Р Л Ĕ

Условисене çак адрĕспе пĕлмеле: Чебоксары, ул. М. Горького, д. № 23.

ГОРТОП.

Шупашкарти пульницана СЧЕТОВОД-КАССИР К И Р Л Ĕ

Администраци.

„ЧĂВАШВĂРМАНПРОМĂН"

УЛАТĂРТИ АВТОШКУЛĔ

предприйатисене тата колхозсене валли шофĕрсем вĕрентме

тÿлевлĕ курса илесси çинчен пĕлтерет

Вĕренмели срук 5 уйăх. Вĕреннĕшĕн 1.200 тенкĕ тÿлемеле.

Сывлăх йенчен шофĕрта ĕçleme йурăххисене, 18 çулхисене тата асăрахххисене курса илеççĕ. Пĕлÿ тĕлĕшĕнчен пуçламĕш шкулта 4 çултан кайа мар вĕренни кирлĕ.

ÇАК ДОКУМЕНТСЕНЕ ТĂРАТМАЛА:

1. Зайавлени,
2. Колхозран йе йалсоветăвчен илнĕ характеристикă,
3. Миçе çул вĕренни çинчен справкă,
4. Паспăрт (пĕрле илсе пымала),
5. Вĕрентнĕшĕн тÿлеме пулнă обйазатĕлствă.

Курса вĕренме кĕрес текенсен кăçалхи çентабĕрĕн 15-мĕшĕ тĕлне Улатăра испытани тытма пымала.

АДРĔС: г. Алатырь, территория быв. л.-завода, 9—10.

2—1

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хакĕсем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 466

Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, ф. 6. 58×94 п. л.